22-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 АПРЕЛЬ 2 КĔÇНЕРНИКУН 77 (6102) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ.

Вырӑнти советсен çуракри вӑхӑтӗнчи задачи

Пирӗн колхозсен хӑçан çуракине пысӑк ӗçсем туса ирттермелле пулать. [illegible] çӗршыва фронт валли нумай апат-çимӗç, тырпул туса памалла. [illegible] колхозниксем, колхозницӑсем, агроном хастарлӑн кӗрешет.

[illegible]

Пала пирӗн çӗршывӑн ССР Верховный Совечӗн Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ ӗççынни депутачӗсен вырӑнти советӗсен председателӗсене çыру çырнӑ. [illegible]

[illegible]

[illegible] юлташ ялсовета кӗрекен колхозсем çуракине тухма мӗнле хатӗрленнипе кашни кун интересленсе ӗçлет. Ялсовечӗн канашлӑвӗсенче колхоз председателӗсен отчечӗсене тӑтӑшах итленӗ, сӳтсе явса кӑтартусем панӑ. Ялсовечӗ çумӗнчи ялхуçалӑх енӗпе ӗçлекен яланлӑх комиссисем çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче активлӑн ӗçлеççӗ, халӑха ӗçе мобилизацилесе пыраççӗ. Çавӑнпа Чемей ялсоветӗнчи колхозсенче çуракине хатӗрленес ӗç лайӑх пулса пырать. «Сеятель», «Страж революции», «Сатурн» колхозсем çуракине тухма хатӗрленсе çитрӗç. «Сеятель» [illegible]

[illegible]

на утӑ тӑратас обязательство шучӗпе леçсе панӑ. Çакӑн пек çитменлӗхсене çийӗнчех тӗрӗ шыв çине кӑларас пулать.

Ялсовет исполкомӗсен председателӗсем çуракине хатӗрленес ӗçре колхозсене ертсе пымалла. «Колхозсен пӗтӗм вӑйне, колхозниксен пӗтӗм пуçарулӑхӗпе хавасланӑхне, колхозсене ертсе пыракансен пӗтӗм çаврӑнӑçулӑхне çуракине ирттерес ӗçе ямалла»,—çапла вӗрентет М. И. Калинин юлташ, çакӑн пек задача тӑрать ялсовечӗсем умӗнче. Ӑна пурнӑçа кӗртессишӗн ялсовет председателӗсен большевикла кӗрешмелле.

М. КАЛИНИН

Ӗççынни депутачӗсен ялсовечӗсен председателӗсене

Юлташсем — ялсовечӗсен председателӗсем! Çурхи уйхир ӗçӗсене тӳрремӗнех ертсе пырасси сирӗн обязанность пулса тӑмасть. Вӑл—колхоз председателӗсен, бригадирсен, МТС-семпе совхозсен директорӗсен, çӗрӗç органӗсен ӗçӗ. Анчах та ялсовечӗсен председателӗсем ака ӗçӗсенчен пӑрӑнса тӑни— совет влаçӗн тупсӑмне тӗрӗс мар ӑнланни, законсене тата обязанноçсене пурнӑçа кӗртменни пулнӑ пулӗччӗ.

Паллах, ӗнтӗ ялсовечӗн председателӗ колхоз председателӗн, бригадирӑн, МТС е совхоз директорӗн ӗçӗсене туса пыма, унтан та ытларах, вӗсене улӑштарма пултараймасть. Ялсовет председателӗн ӗçӗ урӑхла—вӑл совет влаçӗн куçӗ пулса тӑрать. Унӑн çуракине лайӑх ирттерес тӗлӗшпе пур ӗççене те тунине сӑнаса пырас пулать. Чи малтан çакна тӗрӗслес пулать: ака планне тултарма вӑрлӑхсем хатӗрленӗ-и, ака ӗçӗсене ирттерме техникӑна тата туртӑм вӑйне хатӗрленӗ-и? Сӳрӗк çынсен, тимсӗр çынсен ӗçне уйрӑмӑнах çивӗччӗн сӑнаса тӑрас пулать; вӗсем сахалтарах анасласа ларччӑр тесе, хӗрӳллӗнрех ӗçлеччӗр тесе, вӗсене хӑвалаcа, хӗтӗртсе пырас пулать, мӗншӗн тесен çавӑн пек ӳрӗк-сӳрӗк те тимсӗр çынсен хыçӗнче колхозлӑ хресченсен тӑшманӗсем те пытанса тӑма пултараççӗ.

Çапла каласа эпӗ колхоз председателӗсене, бригадирсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене пурне те тимсӗр тесе айӑпласшӑн мар; эпӗ питех те лайӑх ӑнланатӑп, вӗсем нумайӗшӗ—калама çук лайӑх работниксем, стахановецсем, совет çӗршывӗн патриочӗсем пулса тӑраççӗ. Сӑмах вӗсем çинчен мар пырать, сӑмах юлса пыракан, вайсӑр колхозсем çинчен пырать, ун пеккисем вара кӑçал пулмалла мар. Хальхи вӑхӑт — ӳрӗк-сӳрӗк ӗçлемелли вӑхӑт мар. Ялсовечӗсен председателӗсем колхозсене ертсе пыракансене тӳрремӗнех хӑйсен кӑтартӑвӗпе, хӑйсен опычӗпе, хӑйсен административнӑй влаçӗпе пулӑшма тивӗçлӗ. Кирлех пулсан, райисполком председателӗсенчен пулӑшу ыйтмалла. Çаксене пурне те хӑвӑрт, вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи пек туса пымалла.

Пирӗн мухтавлӑ Çар, пирӗн тӑван боецсем совет халӑхӗн тӑшманӗсене хирӗç паттӑррӑн кӗрешеççӗ. Пирӗн фабрикӑсемпе заводсем пӗр чарӑнмасӑр ӗçлеççӗ. Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ ытларах та ытларах хӗçпӑшал, ытларах та ытларах боеприпассем пама хушать. Ытларах та ытларах тырпул, ытларах та ытларах пахча-çимӗçсем памалла,—çак сӑмахсем колхозниксене те, сире те, ялсовечӗсен председателӗсене, пырса тивеççӗ. Хӑвӑн сӳрӗклӗхне тата хӑйӗн тирпейсӗрлӗхне пула кам та кам çак задачӑна пурнӑçа кӗртмест, вӑл ӗнтӗ халӑх умӗнче, совет çӗршывӗ умӗнче чи пысӑк преступлени тӑвать.

Колхозсен пӗтӗм вӑйне, колхозниксен пӗтӗм пуçарулӑхӗпе хавасланӑхне, колхозсене ертсе пыракансен пӗтӗм çаврӑнӑçулӑхне çуракине ирттерес ӗçе ямалла. Хальхи вӑхӑтра колхозниксемпе колхозницӑсем пирӗн çоратнӑ, тӑван Хӗрлӗ Çара пулӑшнӑ çаксӑнта пулать.

1942 çулти мартӑн 28-мӗш.

Çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе пысӑк тухӑçлӑхпа тата лайӑх пахалӑхпа ӗçленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗççынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми çине çаксене кӗртнӗ:

38. **Тӑвай МТС-ӗнчи тракторсен 10-мӗш №-лӗ бригади** (бригадирӗ **И. С. Макаров**). Бригада 1941 çулта тракторпа тумалли ӗçсен планне 100 процентӗпех пурнӑçланӑ. 3 трактора, 1 сеялкӑна, трактор çумне кӑкарса ӗçлемелли 3 плуга тата пӗр культиватора вӑхӑтра юсаса çитернӗ.

39. **Константин Антонович Антонов**—Тӑвай МТС-ӗнчи тракторист. Антонов юлташ хӑй ӗçлемелли трактора 1942 çулти январӗн 1-мӗш тӗлнех юсаса çитернӗ, кун хыççӑн вӑл ытти тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсама тытӑннӑ.

40. **Григорий Флегонтович Козлов**—Тӑвай МТС-ӗнчи машинно-тракторнӑй мастерскойра ӗçлекен рабочи. Козлов юлташ СХТЗ йышши 2 трактора срокчченех юсаса çитернӗ, ремонт ӗçӗ пынӑ вӑхӑтра темиçе хутчен те рационализаторла сӗнӳсем панӑ (магнето якорьне магнитламалли прибор туса хатӗрленӗ, СХТЗ трактор валли радиатор тума вӗренсе çитнӗ, 2 çӗнӗ радиатор туса хатӗрленӗ).

41. **Тӑвай районӗнчи Тӑрмӑш ялсоветӗнчи «8-ое Марта» колхоз** (колхоз председателӗ **Н. Е. Евдокимов** юлташ). Колхоз вӑрлӑхсене хӑйне кирлӗ таран хатӗрлесе хунӑ. Вӗсене сортланӑ, пур енчен те акма юрӑхлӑ тунӑ. Ялхуçалӑх машинисемпе инвентарӗсене юсанӑ, хӗлле тумалли агротехникӑллӑ ӗçсене пурне те туса çитернӗ. Уя 1690 лав тислӗк кӑларнӑ, 29 центнер кӗл, 12 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса хатӗрленӗ.

Иртнӗ çул колхоз, вӑтам шутпа, кашни гектар пуçне 14,6 центнер тырӑ пухса илнӗ. Государствӑна памалли парӑмсене пурне те вӑхӑтра парса татнӑ, уйӑрма кирлӗ фондсене пурне те уйӑрнӑ. Ӗçкунӗ пуçне 4 пин килограмм тырӑ валеçнӗ.

42. **Тӑвай районӗнчи Тӑрмӑш ялсоветӗнчи Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **А. И. Иванов** юлташ). Колхоз районри ытти колхозсенчен пуринчен малтан тырпула çапса пӗтерсе, государствӑна памалли тырӑсемпе ытти продуктсен обязательствисене тултарнӑ. Çуракинче кирлӗ вӑрлӑхсене пур культурӑсем енӗпе те хатӗрлесе сортласа хунӑ. Вӑрлӑхлӑх хатӗрленӗ тырӑ пӗтӗмӗшпех акма юрӑхлӑ кондициллӗ. Плугсене, сеялкӑсене, сӳресене, культиваторсене тата кӳлмелли хатӗрсене мартӑн 1-мӗшне пӗтӗмӗшпех юсаса çитернӗ. Хӗлле тумалли агротехникӑллӑ ӗçсене пурне те тунӑ. Уя 1180 лав тислӗк кӑларнӑ, 26 центнер кӗл, 13 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса хатӗрленӗ.

Чӑваш АСС Республикинчи колхозсем государствӑна обязательнӑй йӗркепе пахча-çимӗçсем тӑратмалли çулталӑкри нормӑсене районсем тӑрӑх палӑртса парасси çинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1942 çулти мартӑн 9-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе килӗшӳллӗн, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ 1940 çулти июнӗн 7-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире обязательнӑй йӗркепе государствӑна пахча-çимӗç тӑратас тӗлӗшпе палӑртнӑ нормӑсене улӑштарас майпа, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ çапла йышӑнаççӗ:

1. Чӑваш АСС Республикинче 1942 çултан пуçласа колхозсем государствӑна обязательнӑй йӗркепе пахча-çимӗçсем тӑратмалли çулталӑклӑх нормӑсене районсем тӑрӑх çакӑн пек çирӗплетсе парас (пахча-çимӗç тӑратма тивӗçлӗ çӗр лаптӑкӗн кашни гектарӗнчен килогрампа):

Районсем	Пӗтӗмпе	Вӑл шутран				
		Купӑста	Кӑшман	Кишӗр	Сухан	Хӑяр
1. Улатӑр	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
2. Канаш	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
3. Шупашкар	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
4. Çӗмӗрле	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
5. Тӑвай	20,42	12,15	2,20	1,55	2,12	2,40
6. Вӑрнар	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
7. Йӗпреç	11,61,	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
8. Ишлей	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
9. Калининск	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
10. Куславкка	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
11. Хӗрлӗ Чутай	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
12. Кувакино	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
13. Сӗнтӗрвӑрри	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
14. Октябрьски	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
15. Пӑрачкав	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
16. Сӗнтӗр	11,61	7.15	1,25	0,95	1,06	1,20
17. Вӑрмар	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
18. Çӗрпӳ	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
19. Шӑхасан	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
20. Етӗрне	11,61	7,15	1,25	0,95	1,06	1,20
21. Элӗк	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
22. Комсомольски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
23. Первомайски	3,10	2,35	0,33	0.42	—	—
24. Советски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
25. Красноармейски	3,10	2,35	0,33	0.42	—	—
26. Чкаловски	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—
27. Шӑмӑршӑ	3,10	2,35	0,33	0.42	—	—
28. Елчӗк	3,10	2,35	0,33	0,42	—	—

2. Çакӑн пек йӗрке тӑвас: çулйӗртен инçетри районсенчи — Элӗк, Комсомольски, Первомайски, Советски, Красноармейски, Чкаловски, Шӑмӑршӑ тата Елчӗк районӗсенчи колхозсем, вӗсен обязательнӑй йӗркепе пахча-çимӗçсем тӑратмалла пулсан, çав районсем валли типӗтнӗ пахча-çимӗçсем тӑратас тӗлӗшпе палӑртса панӑ нормӑсем тӑрӑх, пахча-çимӗçсене хатӗрлев пункчӗсене типӗтсе параççӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. СОМОВ

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.

„Пионер Чувашии“ танк тума укçа пухаççӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Етӗрне хулинчи пионерсем «Пионер Чувашии» танк тума чӗнсе каланине районри шкул ачисем хапӑл туса кӗтсе илчӗç. Чӗнӗве сӳтсе явнӑ хыççӑнах Кушарти пуçламӑш шкулта вӗренекенсем «Пионер Чувашии» танк тума 175 тенкӗ, Яманакри туллимар вӑтам шкул коллективӗ 700 тенкӗ укçа пухса пачӗç.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

СЕНТЕРВАРРИ. Етӗрне хулинчи пионерсем чӗнсе каланине ответлесе, «Пионер Чувашии» танк тума Юртакассинчи пуçламӑш шкулта вӗренекенсем 105 тенкӗ, Шуршӑлти туллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем 105 тенкӗ укçа пухса пачӗç. «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ӗçе Упакассинчи тата Макаçри туллимар вӑтам шкулсен коллективӗсем те активлӑн хутшӑнаççӗ.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартӑн 31-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Мартӑн 31-мӗшӗнче фронтра нимӗнле паллӑ ӗçсем те пулман.

Тӗплӗн палӑртнӑ даннӑйсем тӑрӑх, мартӑн 29-мӗшӗнче нимӗçсенне малтан пӗлтернӗ пек 25 самолет мар, 36 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

Мартӑн 30-мӗшӗнче нимӗçсен 25 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 6 самолет пӗтнӗ.

Мартӑн 31-мӗшӗнче Мускав патӗнче противникӑн 5 самолетне персе антарнӑ.

Пирӗн карапсем Баренц тинӗсӗнче противникӑн подводнӑй лодкине тата транспортне путарнӑ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен Н-ски чаçӑн артиллеристчӗсем, совет пехотин наступленине пулӑшса пырса, пӗр кун хушшинче тӑшманӑн 6 танкне персе çӗмӗрнӗ тата 9 станковӑй пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Мартӑн 30-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем нимӗçсен войскӑсемпе груэсем турттарса пыракан 75 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 30 ытла лавне, 33 полевой тата зенитнӑй орудине, 39 минометне, зенитнӑй пулеметсен 43 точкине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 6 складне тата горючи складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунçул çинчи 18 вагона çӗмӗрсе тӑкнӑ, противникӑн пехотине пӗр ротӑна çити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаçсем икӗ кун хушшинчи çапӑçусенче пӗр паровоз, 80 платформа, таварсем турттармалли 40 вагона, 4 автомашина, 2 оруди, 7 станковӑй тата 15 ручной пулемет, 63 винтовка, 44 автомат, 50 ещӗк снаряд, 250 мина, 30.000 ытла патрон тата ытти тӗрлӗ çар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Калинин фронтӗнче кӗрешекен пирӗн часть пӗр кун хушшинче халӑх пурӑнакан 9 пункта нимӗç оккупанчӗсенчен тасатса ирӗке кӑларнӑ. Тӑшманӑн 107 блиндажне, 13 ДЗОТ-не, 8 огневой точкине çӗмӗрсе тӑкнӑ, продовольстви складне тата боеприпассен 4 складне сирпӗтсе янӑ. Çакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 12 оруди, 41 пулемет, 244 винтовка, 8 автомат, танксене хирӗç пемелли 2 пӑшал, 1400 снаряд, 300 мина, 190 граната, 49.000 патрон, 2 радиостанци, продовольстви складӗ, 185 лаша тата 8 цистерна. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене пӗр пин çынна ытла вӗлернӗ.

* * *

Сержант Седнеев юлташпа 3 боец тӑшманӑн тылӗнче огневой точкӑсен йӗркине тӗпчесе çӳренӗ. Боевой задачине пурнӑçа кӗртнӗ хыççӑн разведчиксем хӑйсен чаçне таврӑнма тухнӑ, анчах та çул çинче вӗсене асӑрханӑ та нимӗçсен пысӑк ушкӑнӗ çавӑрса илнӗ. Пирӗн тӑватӑ боец, пӗр хӑраса тӑмасӑр çапӑçӑва кӗрсе кайса, 10 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ, çавӑрса илнӗ ункӑ татса тухнӑ та нимӗн çухатусӑр хӑйсен чаçне таврӑннӑ.

* * *

Курск облаçӗн оккупациленӗ территорийӗ çинче кӗрешекен партизансен отрячӗсен групписи, нимӗç захватчикӗсене хирӗç çапӑçса пырса, виçӗ уйӑх çурӑ хушшинче гитлеровецсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1463 çынна пӗтерсе тӑкнӑ. Çав вӑхӑт хушшинчех партизансем тӑшманӑн самолетне персе антарнӑ, чугунçулсемпе шоссесем çинче 19 кӗпере взрыв туса сирпӗнтернӗ, 2 оруди, 29 танкпа бронемашина, 157 грузовой автомашина, 7 мотоцикл, груэсем тиенӗ 180 лав, нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсем хваттерте тӑнӑ 56 çурта пӗтерсе тӑкнӑ. Партизансем нимӗçсенчен 3 тупӑ, 6 миномет, 15 пулемет, 168 автомат тата винтовка, радиостанци, 8 автомашина, мотоцикл, 60 велосипед, çар груэсем тиенӗ 40 лав, 50.000 ытла патрон тата кирлӗ оперативнӑй документсем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗçсен 17-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 21-мӗш полкӗнчи 10-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Иозеф Рау çапла каласа панӑ: «Февраль уйӑхӗнче мана 72-мӗш маршевӑй батальонпа Германирен фронта ячӗç. Салтаксем хушшинче вӑрçӑ хӑçан пӗтӗшни тесе калаçни пӗрре те чарӑнма пӗлмест. Пурте мир пуласса ӗмӗтленеççӗ. Мӗнле мир пулӗ вӑл—эпир ун çинчен шутламастпӑр та, мӗнле те пулин мир кӑна пултӑрччӗ. Ӗнтӗ пӗрремӗш çапӑçурах пирӗн взвод хӑйӗн виççӗмӗш пайне çухатрӗ. Эпӗ малти линире 12 кун хушши пултӑм та шутларӑм: манран çитет ӗнтӗ, терӗм, вара тыткӑна парӑнтӑм. Эпӗ Гитлершӑн вилесшӗн мар».

* * *

Румынсен 18-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 92-мӗш полкӗнчи 12-мӗш пулеметнӑй ротӑран тыткӑна лекнӗ салтак Ю. Крэчун çапла каласа парать: «Чи хӗрӳллӗ çапӑçу пынӑ вӑхӑтра Унгуряну сержант мана боеприпассем илме ячӗ. Эпӗ икӗ кун ним те çимен. Манӑн, выçӑскерӗн, патронсем тултарнӑ йывӑр ещӗксене йӑтмалла. Склада çитсен, эпӗ мана мӗн те пулин çимелли пама ыйтрӑм. Мана: çӑкӑр çук, çӗнтерес пулать, терӗç. Эпӗ, тарӑхса çитнӗскер, хам çине патрон ещӗкӗ çӗклесе хутӑм та малти линие утрӑм, вара тыткӑна парӑнтӑм. Красноармеецсем мана тӑрантарчӗç тата турткалли пачӗç».

Апрелӗн 1-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 1-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусемех те пулман.

* * *

Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаçсем çӗр каçиччен халӑх пурӑнакан виçӗ пункта йышӑнса илнӗ. Çухатнӑ позицисене каялла тавӑрас тесе, противник темиçе контратака туса пӑхнӑ, анчах та ӑна пысӑк çухатусем кӳрсе сирсе пӑрахнӑ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче Н-ски подразделенири артиллеристсем нимӗçсен 13 орудине, 4 минометне, 15 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, артиллерин пӗр батарейине пусарса лартнӑ, 5 блиндажне тата 2 ДЗОТ-не çӗмӗрнӗ.

* * *

Хорутенко юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн часть, Калинин фронтӗнче кӗрешекенскер, нимӗçсен контратакине ӑнӑçлӑн сирсе пӑрахнӑ. Каялла чакакан противника йӗрлесе хӑваласа пырса, пирӗн боецсем тӑшмана пысӑк сиен кӳнӗ. Çапӑçу хирӗнче нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсен 350 вилли ытла выртса юлнӑ. Çакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 10 оруди, 7 пулемет, 20.000 патрон, 5.000 снаряд, винтовкӑсемпе автоматсем нумай.

* * *

Блиндажа вырнаçса ларнӑ гитлеровецсен ушкӑнӗ пирӗн наступлени туса пыракан боецсем çине пӑшалсемпе пулеметсенчен персе тӑнӑ. Красноармеец Кошелев юлташ тарӑн юр тӑрӑх тӑшманӑн блиндажӗ патне шӑвӑнса пынӑ та, унта темиçе граната пӑрахса, нимӗçсен 10 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ. Кошелев юлташ, вилнӗ нимӗçсен винтовкисене, икӗ автоматне илсе тухса, хӑйӗн подразделенине пӗр сиенленмесӗр таврӑннӑ.

* * *

Трусов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн чаçри боецсем противникӑн самолечӗ çине пӑшалсемпе пулеметсенчен ушкӑнпа пеме тытӑннӑ. Самолета вут хыпса илнӗ те, вӑл çӗр çине тӑрӑннӑ.

* * *

Смоленск облаçӗнчи партизансен Ф. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ 6 кӗпере взрыв туса сирпӗнтернӗ тата нимӗçсем фронт патнелле хӑйсен резервӗсене турттаракан чугунçула темиçе километр тӑршшӗ аркатса тӑкнӑ. Çав отрядри боецсем нимӗçсен фашистла оккупанчӗсене 60 çынна вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Нимӗçсен 208-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 309-мӗш полкӗнчи 5-мӗш ротӑн тыткӑна лекнӗ командирӗ Карл Савала çапла каласа панӑ: «Пирӗн дивизи питӗ пысӑк çухатусем тӳсрӗ, вӑл ӗнтӗ наступлениллӗ операцисем тума юрӑхсӑр. 309-мӗш полкра çухатусем уйрӑмах пысӑк. Эпӗ командир пулса тӑнӑ 5-мӗш ротӑра 40 салтак кӑна тӑрса юлнӑ, 6-мӗш ротӑра — 50 салтак, 7-мӗш ротӑра вара — 30 салтакран ытла мар юлнӑ. Офицерсем нумайӑшӗсем стройран тухрӗç. Юлашки çапӑçусенче иккӗмӗш батальонӑн командирӗ капитан Ноак, батальоннӑй врач Мюллер вилчӗç, 7-мӗш ротӑн командирӗ старши лейтенант Мунзер, лейтенант Тэшер, лейтенант Крис тата ыттисем нумайӑшӗсем аманчӗç».

* * *

Германи правительстви распоряжени пичетлесе кӑларнӑ. Çав распоряженире çапла каланӑ: «Кам укçа-тенке пытарса усрать, ӑна тӗрмене хупмалла тӑваççӗ, уйрӑмах нумай пытарнисем пулсан, вӗсене каторгӑра ӗçлеттермелле тӑваççӗ». Гитлеровецсен çав çӗнӗ законӗ, Германири ӗççыннисене пуçӗпех çаратас шутпа тунӑскер, Германи çӗршывӗнче шалти политика тата экономика тӗлӗшпе лару-тӑру малалла çивӗчленсе пынине кӑтартса парать.

Вӑрçӑран çавтери пысӑк тупӑшсем илсе, гитлерла шайка вӑрçӑн мӗнпур йывӑрлӑхӗсемпе асапӗсене Германири ӗççыннисем çине тӳнтернӗ. Нумай тӗрлӗ налогсем хурса, фашистла заправилӑсем рабочисемпе служащисен ӗç укçинчен нумайрахӗш пайне туртса илеççӗ. Анчах çапах та çакӑ вӑл гитлеровецсемшӗн çителӗксӗр пулнӑ. Гитлеровецсем вӑрçӑ пӗтсен пӗр çул иртнӗ хыççӑн тин каялла тавӑрса пама пулнӑ «илмӗр пек çирӗп перекетлӗх» фончӗ тунисӗр пуçне, ӗççыннисен ӗç укçийӗнчен ирӗксӗрлесе средствӑсем уйӑрса илме тӗрлӗ майсем шухӑшласа кӑларнӑ.

Вӗçӗ 4-мӗш страницӑра

ОТЕЧЕСТВЕННӐЙ АСЛӐ ВӐРÇӐН ФРОНЧӖСЕНЧЕ

ПАТРИОТКА-ХӖРСЕМ ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИРЕ (Хӗвеланӑç фрончӗ). Ӳкерчӗк çинче: Н-ски Гвардейски дивизири хӑюллӑ радистка-гвардеец-сем Людмила Плакшепе (сулахайра) Евдокия Фомина командӑн пунктран радиограмма параççӗ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Тӑшманӑн ДЗОТ-ӗсене хупӑрласа илни

ХӖВЕЛАНӐÇ ФРОНЧӖ, мартӑн 30-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Халӑх пурӑнакан пӗр пунктран нимӗçсем хирӗç тӑмалли вӑйлӑн çирӗплетнӗ вырӑн туса хунӑ. Вӗсем çав вырӑна юрпа хупалаcа çавӑрӑнӑ, танксем валли те, пехота валли те тӗрлӗ чӑрмавсем туса пӗтернӗ.

Халӑх пурӑнакан çак пунктшӑн çапӑçу вӗтлӗхре, ялтан инçех мар, пуçланса кайнӑ. Политрук заместителӗ Шавалдышева танксен десантне ертсе кайса тӑшманӑн ДЗОТ-ӗсене хупӑрласа илме хушнӑ. Танксем вӑрман ӑшне кӗрсен, десантниксем машинисенчен тухнӑ та тӑшманӑн ДЗОТ-ӗсем еннелле çул тытнӑ. Малта Шавалдышев юлташ пынӑ. Вӑл нимӗçсен ДЗОТ-ӗ патне пуринчен малтан çывхарса çитнӗ те амбразурӑна унӑн-хыççӑн гранатӑсем ывӑтма тытӑннӑ. Тӑшман тӑна та кӗрсе çитеймен, пирӗн боецсем çав майпах фашистсен иккӗмӗш ДЗОТ-не те аркатса тӑкнӑ. Аркатманни тата икӗ ДЗОТ юлнӑ. Паттӑр совет воинӗсем виççӗмӗш ДЗОТ çине ыткӑннӑ. Вӗсем çавтери хӗвӗрт тата сасартӑк пырса çитнине ДЗОТ-ра ларакан гитлеровецсем пӗрре те персе юлаймаН.

— Аллӑрсене çӳлелле çӗклӗр!—кӑшкӑрса янӑ Шавалдышев.

ДЗОТ-ран аллисене çӗклесе ултӑ нимӗç автоматчикӗ тухнӑ. Шавалдышев пӗр боеца çав тыткӑна илнӗ нимӗçсене штаба леçсе хӑварма хушнӑ. Хӑй тарӑн юра сухаласа тӑваттӑмӗш—чи юлашки ДЗОТ патнелле шунӑ. Нимӗçсем автоматсемпе пулеметсенчен тӑвӑллӑн пеме тытӑннӑ. ДЗОТ патне çитме темиçе метр кӑна юлсан, Шавалдышева амантаççӗ, анчах çапла пулсан та вӑл тӑшманӑн амбразурисем çине пеме чарӑнман. Нитех те тӗл персе вӑл ӗнтӗ икӗ 5 фашиста вӗлерет. Пирӗн боецсем ДЗОТ алӑкӗсем умне пырса çитеççӗ. Çав вӑхӑтра Шавалдышева тӑшманӑн тепӗр пульли çаклать—хальхинче ӗнтӗ Шавалдышев вилӗмрен çӑлӑнаймасть.

Вилес умӗн Шавалдышев хӗватлӑ асламӗ пек [illegible] кӑлкӑрнине илтет. Ку ӗктӗ пирӗн пехота тӑшмана хирӗç атакӑна çӗкленнӗ. Тӑшманӑн хирӗç тӑмалли çирӗплетнӗ вырӑнне хальхи вӑрçӑра никӑçан пулман хӑвӑртлӑхпа аркатса тӑкнӑ. Пирӗн боецсем фашистсен пысӑк ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ, хӑйсенчен пӗр çын кӑна çухатнӑ. Çав çын Шавалдышев пулнӑ.

И. ГРИБОВ.

Севастополе хӳтӗлекенсен кулленхи ӗçӗсем

Оборонӑна тытмалли Севастополь районӗ — Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрçӑ фрончӗн сулахай флангӗ пулса тӑрать. Кунти боевой условисем вӑтӑк та хӑйсене евӗрлӗ. Пирӗн оборонӑн малти хӗрри сӑртсен чӑнкӑ хӗррисене хӗсӗнсе евӗр тӑрӑнса кӗрет. Тӑшман сӑрт тӑррисен хысакӗсене йышӑнса тӑрать. Унӑн позицийӗ лайӑхрах. Апла пулин те, совет боецӗсем йышӑнса илнӗ вырӑнсене тӑшман пырса кӗреймест.

Севастополе хӳтӗлекен çынсем — геройсем. Вӗсем малалла кӑна пӑхаççӗ. Хыçалта—тинӗс, малта—илхаллӑ тӑшман. Тӑшманӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пӗтерсе пырас, ӑна кӗнтӗрла та, çӗрле те пыра-пыра çапас, ӑна халран ярас, унӑн тылне тарӑнӑн сӑрхӑнса кӗрес, вӑл ӑçтан персе тӑнине пӗлес—çак задачӑсене пурнӑçласа пыраççӗ ӗнтӗ отечественнӑй вӑрçӑн сулахай флангӗнчи боецсем. Вӗсем тӑшмана пысӑк çухатусем кӳреççӗ.

Акӑ Генуэзски крепоçӑн башни. Ваннӑра вырнаçнӑ хӑюллӑ боецсен пӗчӗк ушкӑнӗ нимӗç салтакӗсене окопсемпе блиндажсенчен пуç кӑларма памасӑр хӑратса тӑрать. Вӗлернӗ нимӗçсен шутне чи малтан Редькин сержант пуçласа янӑ. Вӑл 53 нимӗçе пӗтернӗ. Ӑна кура политрук заместителӗ Гусев та 25 фашиста вӗлернӗ. Повар Волков юлташ та çапӑçӑва хутшӑнать. Боецсене апат валеçсе парать те, малтанах хатӗрленӗ вырӑна кайса, тӑшман çине тӗл перет.

Тӑшман ӑçтан персе тӑнине тата унӑн çирӗплетнӗ вырӑнӗсене разведчиксем ывӑнма пӗлмесӗр йӗрлесе тӗпчеççӗ. Пӗррехинче кӗçӗн лейтенант Виноградов ертсе пыракан разведчиксем тӑшманӑн расчетне тӗл пулнӑ та, кӗске çапӑçу пулса иртнӗ. Фашистсен 15 салтакӗ пӗтнӗ тата вӗсен пӗр унтер-офицерӗ тыткӑна лекнӗ. Виноградов юлташ хӑй виçӗ салтакпа пӗр унтер-офицера вӗлернӗ. Нимӗçсене хирӗç пыракан çапӑçусенче пулса, Ерофеев юлташӑн чаçӗнчи разведчиксем нимӗçсен салтакӗсене икӗ ротӑна яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ, 36 винтовка, 2 автомат, 54 граната, 3500 патрон, 2 километр тӑршшӗ телефон кабелӗ тата ытти нумай çар хатӗрӗсем тытса илнӗ, унсӑр пуçне противникӑн войскисем хушшинче 5 пин листовкӑпа брошюра салатнӑ. Лейтенант Коренев юлташ ертсе пыракан хӑюллӑ ултӑ боец, фашистсен ДЗОТ-ӗ патне систермесӗр пырса, унӑн ӑшне гранатӑсем ывӑтнӑ. Унта пулнӑ нимӗçсем пурте пӗтнӗ. Хӑюллӑ боецсем дисксемпе пулемета тата ытти тӗрлӗ хӗçпӑшалсене илнӗ те каялла таврӑннӑ. Юнашар блиндажсенчи нимӗçсем пирӗннисем çине ыхтӑн пенӗ, анчах кая пулнӑ. Тӗмеллӗ вырӑнсемпе пӗлсе усӑ курса, боецсем хӑйсен подразделенине чиперех таврӑннӑ. Каялла пынӑ чухне красноармеец Малышин юлташ тӗл персе нимӗç захватчикне вӗлернӗ.

Тепрехинче çак ушкӑна асӑрханӑ та вӗсем çине пулеметсемпе минометсенчен хыттӑн пеме тытӑннӑ. Разведчиксем çапӑçӑва хӑюллӑн кӗнӗ те тӑшманӑн пехотине пӗр взвода çити пӗтерсе тӑкнӑ.

Парти организацийӗсенче çӗнӗ çынсене тӑтӑшах парти ретне илеççӗ. Нумаях пулмасть ВКП(б) кандидатне çамрӑк разведчик Жабров юлташа илнӗ. Севастополе хӳтӗлекен çакӑ çамрӑк паттӑр боевой позицисене, противник йышӑннӑскерсене, кашни кун пекех çӳрет, тӑшманӑн тылне шикленмесӗр кӗрсе каять, хаклӑ сведенисем пухать. Жабров юлташ разведчиксен группипе пӗрле противник йышӑннӑ вырӑнсенчен 20 винтовка, ручной пулемет, автомат тата чылай патронсемпе гранатӑсем илсе тухнӑ. Çапӑçусенчен пӗринче Жабров юлташа амантнӑ, анчах вӑл хӑйӗн заданине пурнӑçа кӗртиччен стройра пулнӑ. Паллӑ снайперсем Левкинпа Гусев, хӑюллӑ разведчиксем Мясников, Климов, Омшин, Волжин, Жеников т. ыт. те парти ретне кӗнӗ.

Партин чаçри организацийӗ командирсемпе боецсем хушшинче воспитанилӗ пысӑк ӗçсем туса пырать, командирсемпе политработниксене снайперсен, разведчиксен, минометчиксен, пулеметчиксен боевой активне пӑхса çитӗнтерме пулӑшать. Парти организацийӗн секретарӗ Никулин, чаçӑн военкомӗ Смирнов юлташсем, боецсем хушшинче тӑтӑшах пулса, вӗсене паттӑр, хӑюллӑ пулма, çӗнтерӳшӗн нимӗн умӗнче те чарӑнса тӑмасӑр кӗрешме вӗрентеççӗ.

Хулана тӑшман хупӑрласа тӑрать. Çакӑ хулан пӗтӗм пурнӑçӗпе ӑна хӳтӗлекен войскӑсем çине хӑй тӗрлӗ йӗр хывать. Осада чылай йывӑрлӑхсем кӳрет. Анчах Севастополь çыннисенчен кирек камран та—вӑл тепӗр енче пысӑк çӗр çине каçасшӑн-и? тесе ыйтсан—вӑл сире хирӗçле ответ парать. Стройри боецсемпе командирсем кӑна мар, медсестрасем те, хулари рабочисемпе служащисем те хӑйсем Севастополе никам пырса кӗмелле мар крепость туса хунӑ паттӑр патриотсен çемьинче пулнипе мухтанаççӗ. Красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем малашлӑх çине çирӗппӗн шанса пӑхаççӗ.

Нимӗçсен Крымри вӑрӑ-хурахӗсене халӗ Кӑнтӑрти хӗвелрен мар, Хӗрлӗ Çар чаçӗсем вӑйлӑ çапнинчен шӑрӑх тивет. Севастополе осадӑра тытса тӑрасси, нимӗç оккупанчӗсем Крымра хуçаланасси часах вӗçленӗ. Севастополь нимӗç хӑрушлӑхӗнчен тухӗ, Крым нимӗçсен атти айӗнчен тухӗ. Анчах хула-герой тӑшман хупӑрласа тӑнӑ кунсенче унӑн патне пымалли вырӑнсене гитлерла бандӑсем тапӑннинчен хӳтӗлекенсене тӑван çӗршыв яланах асра тытӗ. Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ геройӗсем çинчен хывнӑ юрӑсенче авалхи Генуэзски крепоçӑн башни çинчен фашистла варварсене пӗтерсе тӑнӑ хӑюллӑ паттӑрсене тивӗçлипе асӑнӗç, Севастополе паттӑрла хӳтӗлекенсене пурне те мухтавлӑн асӑнса юрлӗç.

Ф. КОЗЫРЕВ.

(«Правда» хаçатран).

Совет летчикӗсен тепӗр çӗнтерӗвӗ

ÇУРÇӖР-ХЕВЕЛАНӐÇ ФРОНЧӖ. (ТАСС спецкорӗ). Фронт линийӗ тӑрӑх патрульре çӳренӗ чухне совет летчикӗсем—подполковник Московецпа лейтенант Василий Усенко 600 метр çӳллӗшӗнче нимӗç бомбардировщикӗсен пысӑк ушкӑнне курнӑ. Çав ушкӑнра 15 самолет пулнӑ. Тӑшманӑн машинисем пирӗн чаçсем çине бомбӑсем пӑрахма тухнӑ иккен. Бомбардировщиксене 10 «Мессершмитт» тата 1 «Хейнкель» хӳтӗлесе пынӑ.

Тӑшмансен йышӗ пысӑк пулнӑ пулин те, пирӗн летчиксем вӗсемпе çапӑçу пуçласа янӑ. Московец юлташ хӑйӗн истребительне «Юнкерссен» евенӗ çине тытнӑ. Сасартӑк тупӑран та, пулеметран та пенипе нимӗç машинисем хӑйсен йӗркине çухатаççӗ, тарма тытӑнаççӗ. Çав вӑхӑтра лейтенант Усенко нимӗçсен пӗр бомбардировщикне атакӑлать, пулеметран çунтарса ӑна çӗр çине персе антарать. Подполковник Московец иккӗмӗш атакӑна ыткӑнать. Вӑл, нимӗç бомбардировщикӗ патне 50 метр çывӑха пырса, пулеметран перет, фашистсен стрелокне стройран кӑларать. Иккӗмӗш хут персен, пилочӗ те вилет. Бомбардировщик вара чул пек çӗрелле тирӗнет, хӑйӗн бомбисем хӑйпех ӑна аркатса тӑкаççӗ.

Сывлӑшри çапӑçу 20 минутӑна тӑсӑлнӑ, çапӑçу совет летчикӗсем çӗнтернипе вӗçленнӗ. Нимӗçсен бомбардировщикӗсем пӗри те хӑйсен бомбисене пирӗн войскӑсем вырнаçнӑ вырӑнсене пӑрахаймаН. Фашистла вӑрӑ-хурахсем 2 самолет çухатса, бомбисене ӑçта килчӗ çавӑнта пӑрахса, каялла тарнӑ.

Московецпа Усенко иккӗшӗ те сывлӑшра çапӑçма лайӑх хӑнӑхса çитнӗ ӗнтӗ. Московец вӑрçӑ пуçланнӑранпа тӑшманӑн 8 машинине, Усенко—4 машинине пӗтерсе тӑкнӑ. И. ДЕНИСОВ.

Тӑшманӑн контратакине сирсе пӑрахнӑ

ÇУРÇӖР-ХЕВЕЛАНӐÇ ФРОНЧӖ, мартӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Германин командованийӗ пирӗн фронтӑн участокӗсенчен пӗринче хӑйсен çавӑрса илнӗ 16-мӗш армийӗн чаçӗсем патне çӗмӗрсе кӗме хӑтланнӑ. Вӗсем хӑйсен «суркунне»-хи юлашки вӑйне—пехотине, танкӗсене, артиллерипе авиацине пӗр çӗре пухса, вӑйлӑ контратака пуçласа янӑ. Тӑшмансен йышӗ пысӑк пулнӑ пулин те, пирӗн боецсем вӗсен контратакине сирсе пӑрахнӑ, фашистсене пысӑк çухатусем кӳнӗ. Пӗр çапӑçура кӑна çапӑçу хирӗнче нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсем 300 çын ытла вилсе выртса юлнӑ. 4 танк пӑрахса хӑварса, тӑшмансем каялла хӑйсен малтанхи вырӑнне чакнӑ.

Нимӗçсен вӑйлӑ контратакине сирсе пӑрахнӑ чухне пирӗн мухтавлӑ воинсем каллех хӑйсем вӑрçӑ ӗçне тӗплӗн пӗлнине, хӑюллӑ та паттӑр пулнине кӑтартрӗç. Н-ски чаçри летчиксем пӗр кун хушшинчех нимӗçсен 10 самолетне персе антарнӑ. Красноармеец Буев винтовкӑран тӗл персе тӑшман пулеметчӗн расчетне пӗтерсе тӑкнӑ, пулеметне тытса илсе фашистсене хӑйсенех çулма тытӑннӑ. Капитан Лохамец командир пулса ертсе пыракан подразделенири гвардеец-минометчиксем тӗл персе 100 фашиста ытла вӗлернӗ. Н-ски чаçри саперсем фашистсен танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ, 5 танкистне вӗлернӗ, пӗрне тыткӑна илнӗ.

И. ДЕНИСОВ.

Партизансем нимӗçсен пехотин батальонне аркатса тӑкнӑ

КАЛИНИН ФРОНЧӖ, мартӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Партизансен отрячӗсем Хӗрлӗ Çарӑн чаçӗсемпе çыхӑну тытса кӗрешеççӗ, тӑшмана пысӑк çухатусем кӳреççӗ. Партизансен икӗ отрячӗ, Н-ски чаçӑн разведчикӗсемпе пӗрле пулса, нимӗçсен пӗр яла вырнаçнӑ батальонне кӗтмен çӗртен атакӑланӑ.

Хӗрӳ çапӑçу пуçланса кайнӑ, çав çапӑçура партизансем фашистсен салтакӗсемпе офицерӗсене 300 çынна вӗлернӗ, 10 автомашинине çӗмӗрсе тӑкнӑ, боеприпассен 3 складне сывлӑша сирпӗнтернӗ, 12 оруди, 12 пулемет тата автоматсем чылай тытса илнӗ. Аркатса тӑкнӑ батальонӑн чӗрӗ юлнӑ салтакӗсем аялти кӗпе вӗççӗнех вӑрмана тарнӑ... тупса тарнӑ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.



СЕВАСТОПОЛЬ ОБОРОНИ. Ӳкерчӗкçинче: кӗçӗн сержант Шевченкон вениттӑй орудийӗ противникӑн самолечӗ çине перет.

Н. АСНИН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Михаил Кутузов

Михаил Илларионович Кутузов, гениллӗ полководец тата хӑйӗн халӑхне чунтан юратнӑ хӗрӳллӗ патриот, нихӑçан та ӗççыннисен асӗнчен тухас çук. Ӑна пула, вӑл çавтери пултаруллӑ çар начальникӗ тата ӑслӑ организатор пулнипе, 1812 çулта пирӗн тӑван çӗршывӑмӑр хӑйӗн ирӗклӗхне упраса юлнӑ, ют çӗршывран килнӗ вӑрӑ-хурахсене аркатса тӑкма пултарнӑ. Наполеон войскисене Россия çӗрӗнчен хӑваласа кӑларса, Кутузов пӗр Россиешӗн кӑна мар, пӗтӗм Европӑшӑн усӑллӑ ӗç тунӑ.

Михаил Илларионович 1745 çулта çар çыннин çемьинче çуралнӑ.

Кутузов 16 çултах çарта ӗçлеме тытӑнать. Вӑл чи малтанах Суворов командир пулса тӑракан полка лекет те нумайран вара Суворовран уйӑрӑлмасть те.

Вӑл тӑшмансене парӑнма пӗлмен генералиссимус Александр Суворовӑн воспитанникӗ пулнӑ. Турцин Измаил крепоçне 1790 çулта штурмланӑ çӗрте те тата ытти çапӑçусенче те вӑл Суворовпа пӗрле пулать.

Суворов Измаил крепоçӗ патӗнче вырӑссем çӗнтерни çинчен Екатерина II патшана çырса пӗлтернӗ май Кутузов ятне ыррӑн асӑнса хӑварать. Вӑл ӑна калама çук паттӑр генерал тесе хаклать.

Михаил Кутузовӑн талантӗ пуринчен ытла çакӑнта палӑрса тӑрать: Кутузов паттӑр пулнӑ, анчах та вӑл ӗçе кирек хӑçан та сыхланса, асӑрханса тунӑ. Салтаксене Кутузов, хӑйӗн учителӗ Суворов пекех, пӗтӗм чунтан юратнӑ, вӗсемшӗн тем тума та хатӗр пулнӑ.

Кутузов ӗçе сыхланса, асӑрханса тума юратни хӑравçӑран мар. çук. ӗçе кирек хӑçан та ӑнӑçлӑ тӑвас тенӗрен килнӗ. Унӑн тактики войско вӑйне упрасем пӗчӗк çухатусемпех пысӑк çӗнтерӳсем тума май панӑ. Кутузов çара сыхласа юлма кирлине, татӑклӑ вӑхӑт тӗлне тӑшманран вӑйлӑрах пулмаллине питӗ лайӑх пӗлсе тӑнӑ.

Аустерлиц, Рущук, Бородино патӗнче те,—пур çӗрте те Кутузов çак тактикӑна тытса пынӑ.

1812 çулта отечественнӑй вӑрçӑ пынӑ чухне чи йывӑр вӑхӑтра Кутузова вырӑс çарӗн командующийӗ тӑваççӗ. Вырӑссен çарӗ чакнӑ. Наполеон войскисем Мускав çинелле тӑвӑл пек çӗмӗрсе пынӑ. Кутузов умӗнхи командующи Барклай де-Толли Наполеон çарне хирӗç тӑма хӑяйман, вӑл тӑшманӑн çавтерӗ вӑйлӑ çарӗ хӑйне пӗтерсе хурасран хӑранӑ пулнӑ. Вырӑс халӑхӗпе вырӑс çарӗ Кутузов полководец килсен татӑклӑ наступлени пуçланасса кӗтнӗ.

Наполеон Россиӗне тапӑнса пырса кӗни вырӑс халӑхне чунтан тарӑхтарнӑ. Вырӑс халӑхӗ захватчиксене хирӗç вӑрçа çӗкленнӗ.

Европӑри хӑшпӗр историксем, Наполеон тесен тем те тума хатӗр тӑракан çынсем, çапла калаНӑ: Россиӗнче вырӑс халӑхӗн паттӑрлӑхӗпе патриотизмӗ мар, юр кӗрчӗсемпе шартлама сивӗсем вилӗмрен çӑлса хӑварнӑ,—тенӗ. Анчах та Наполеон çарӗ пӗтесси пӗр çанталӑкран кӑна килмен.

Çӗнтересси пуринчен ытла çынран, хӗçпӑшалланнӑ боецран килет. Камӑн боецӗсем хӑйсен тӑван çӗршывне чунчӗререн юратаççӗ, камӑн боецӗсем хӑйсен тӑван çӗршывӗшӗн пуçӗсене те хума хатӗр, камӑн боецӗсем тӑшмана çӗнтерес кӑмӑлпа хавхаланнӑ, çавӑ çӗнтерет. Мускав патӗнчи аслӑ çапӑçура вырӑс халӑхӗ арӑслан пек çапӑçнӑ. Французсем калама çук вӑйлӑ атакӑланӑ, анчах та вӗсен атаки çав-çавах ӑнӑçлӑ пулайман.

Вырӑс çарӗ, чакма чарӑнса, Мускав çывӑхӗнче, Бородино патне вырнаçнӑ. Мускава çапӑçмасӑр памашкӑн юраман. Кӑна Кутузов хӑй те лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Çапла вара, çак вырӑнта питӗ вӑйлӑ çапӑçу пулса иртет. Багратион флешӗсем патӗнче, Семеновски ялӑн çирӗплетнӗ высоти çинче тата ытти çӗрте те çапӑçусем çӗмçӗрлеччченех пынӑ.

Французсен çухатӑвӗ питӗ пысӑк пулнӑ, ӗнтӗ французсем хӑйсен резервне те çапӑçӑва кӗртнӗ. Вӑрçа кӗменни пӗр гварди çеç тӑрса юлнӑ. Анчах çав гвардие те вӑрçа кӗртсе аркатса тӑксан — пӗтрӗ вара. Çавӑнпа та Наполеон, вырӑссен вӑйӗ ытлашши чакманнине курсах тӑнӑскер, атакӑлама пӑрахнӑ, вырӑссен позицине артиллерирен кӑна перҫтернӗ. Каçхине вара, вырӑссем контрнаступлени тӑвасран хӑраса, Наполеон Калуга шывӗн тепӗр енне чакнӑ, кӑнтӑрла çапӑçса туртса илнӗ высотӑсене каялла пӑрахса хӑварнӑ.

Бородино патӗнчи çапӑçу вырӑс çарӗ çавтери вӑйлӑ пулнине, вырӑс халӑхӗ ют çӗршывран килнӗ вӑрӑ-хурахсене тем пек курайманнине, вӑл хӑйӗн тӑван çӗршывӗшӗн вута та кӗме хатӗррине кӑтартса панӑ. Бородино патӗнчи çапӑçу çинчен каярахпа Наполеон хӑй акӑ мӗн çырнӑ: «Эпӗ курнӑ çапӑçусенчен чи хӑрушши вӑл — Мускав патӗнче пулса иртнӗ çапӑçу. Çав çапӑçура французсем хӑйсене çӗнтерӳ тума тивӗçлӗ çынсем пек кӑтартрӗç, вырӑссем вара хӑйсене никам çӗнме пултарайман право илчӗç...»

Çар историкӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Бородино патӗнчи çапӑçу французсен кавалерийӗпе артиллеришӗн масар пулнӑ. Вырӑс генералӗ Ермолов калашле, çав çапӑçура французсен çарӗ вырӑс çарӗ çине пырса çапӑннӑ та арканса кайнӑ.

Бородино патӗнчи çапӑçу Наполеон вилӗмӗн пуçламӗшӗ пулнӑ.

Икӗ кун хушши вӑйлӑ вӑрçнӑ хыççӑн, вырӑс çарӗ çӗкӗрен наступлени тума хатӗрленнӗ. Анчах та çухатусене шутласа пӑхсан, çӗнӗ наступлени тума вӑй çитеймеккине палӑрнӑ. Кутузов вырӑс çарне çӑлас тесе, каллех чакма приказ панӑ.

Мускав çывӑхӗнче, Филя ялӗнче çар çыннисен канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Çав канашлура Кутузов: çӗршыва çӑлас тесен Мускава шеллес пулмасть, тенӗ. Генералсен сӑмахӗсене пӗтӗçтерсе, вӑл çапла каланӑ: «Мускава çухатни Россиӗна çухатнине пӗлтермест-ха. Сирӗн çара сыхламалла, хамӑра пулӑшма килекен вӑйсемпе пӗрлешмелле, Мускава парса, çапла вара тӑшмана ирӗксӗрех хӑйӗн вилӗмне туптармалла». Хӑйӗн сӑмахне Кутузов çапла вӗçленӗ: «Тӑван çӗршывӑмӑршӑн ырӑ пултӑр тесе каялла чакма хушатӑп»,—тенӗ.

Вӑхӑт ватӑ полководецӑн тактики питӗ те тӗрӗс пулнине кӑтартнӑ. Мускав Наполеон çарӗшӗн масар пулса тӑнӑ. Халӑх пур çӗрте те партизанла вӑрçӑ пуçласа янӑ, çара пулӑшма пур кӗтесрен те ополченецсем пынӑ.

Вырӑс патриочӗсем чӗртсе янӑ Мускавра вут лӑпӑнса тӑнӑ. Ӗçсем Наполеон шухӑшланӑ пек пулса пыман. Вӑл Мускава илсенех вырӑссем мир тӑвасшӑн пулӗç тесе шухӑшланӑ, анчах та акӑ пӗри те ӑна мир тӑвар тесе калаканӗ пулман. Наполеон çарӗ ишӗлсе, арканса пынӑ, дисциплина пӗтсе ларнӑ, салтаксем чирле пуçланӑ, апат-çимӗçсем пӗтсе çитнӗ.

Çав вӑхӑтра Кутузов вӑйлӑ çар пухса çитернӗ, çӗнӗрен пулӑшу илнӗ. Систермесӗр тӑшмана флангсенчен çавӑрса илнӗ, кӑнтӑр еннелле, продовольстви тӗлӗшӗнчен пуян районсем еннелле каякан çулсене пӳле-пӳле лартнӑ.

Йӗри-таврашӗпех халӑхсен партизанла вӑрçи пынӑ. Давыдов, Сеславин, Фигнер, Платов тата ыттисен отрячӗсем тӑшмана татти-сыпписӗр кансӗрленӗ. Мускав çывӑхӗнче, Богородск вӑрманӗнче, Герасим Курин отрядӗнчи хресченпартизансем вӑйлӑн кӗрешнӗ, Смоленск кӗпӗрнинче, Сычевск уездӗнче, старостиха Василиса Кожина отрячӗ канӑç паман. Тӑшман пысӑк çухатусем тӳснӗ.

Кутузов тата çакӑнпа та вырӑс халӑхӗшӗн паха: вӑл партизанла отрядсене тӗрӗс ӑнланнӑ, вӗсене организацилеме пулӑшнӑ, вӗсемпе тивӗçлӗ усӑ курма пӗлнӗ. Çапла вара, Наполеон çарне Мускавра пӗр уйӑх ытла пурӑннинчен нимӗн усси те пулайман. Халӑх ӑна пур çӗрте те çилӗпе кӗтсе илнӗ, ӗçме-çиме тӗлӗшпе пурнӑç йывӑрланса пынӑ, тухмалли-кӗмелли çулсене пурне те пӳлсе лартнӑ. Октябрь уйӑхӗнче Наполеона Мускавран тухса кайма тивет, вӑл Калугӑна, Тулӑна, кӑнтӑрти пуян, çӑкӑр-тӑварлӑ кӗпӗрнесене çитме ӗмӗтленет. Анчах та ун ӗмӗтленни пурнӑçа кӗреймест, Кутузов çарӗ унӑн çулне пӳлсе хурать.

Тарутинӑпа Малоярославец патӗнче французсемпе вырӑссен çарӗсен малти чаçӗсем пӗр-пӗринпе тӗл пулаççӗ, çапӑçу пуçланса каять. Вырӑс войскисем французсене çӗмӗрсе тӑкаççӗ, Ирӗксӗрех вара Наполеон çарне кивӗ çулпах, хӑй çаратса хӑварнӑ Смоленск çулӗпех, Верея, Можайск урлӑ каялла чакма тивет.

Наполеон çарӗн вӑйӗсем чакнӑçемӗн чакса пынӑ. Вырӑс çарӗ, аслӑ полководец Кутузов ертсе пынипе, Наполеона пӗр канӑç памасӑр хӑваласа пынӑ.

Березина шывӗ патӗнче çапӑçу пулса иртнӗ хыççӑн Наполеон çарӗ сапаланса, çухалса каять. Наполеона хӑйне те çарне пӑрахсах Россиӗрен тухса тарма тивет.

Тӑшмана хӑваласа пырса, вырӑс çарӗ чикӗ урлӑ каçнӑ. Вырӑс войскисен вӑйӗпе Наполеонӑн империне аркатса, пӗтерсе тӑкнӑ.

Михаил Кутузовӑн ячӗ вырӑс халӑх историйӗн чи çутӑ страницине çырӑннӑ. Ун ятне 1812 çулта вырӑс халӑхӗ отечественнӑй вӑрçӑра пысӑк çӗнтерӳ туни çинчен çырнипе пӗрле çырса хунӑ. Вырӑс халӑхӗ çав çӗнтерӗве, çав полководеца, çав паттӑр çарӑн, тӑван çӗршывне хӳтӗлеме пултарнӑ мухтавлӑ çарӑн мухтавлӑ çулпуçне ӗмӗр-ӗмӗр манмӗ.

Наполеон çарне аркатса тӑкнӑ хыççӑн, I Александр патшан, Кутузова кураймаН пулсан та, ирӗксӗрех çапла калама тивнӗ: «Эсир пӗр Россиӗна кӑна çӑлмарӑр, эсир пӗтӗм Европӑна çӑлтӑр».

Наполеон хӑй те Кутузова ӑслӑ полководец вырӑнне хурса хисепленӗ. Пӗринче вӑл çапла каланӑ: ватӑ тилӗ чӑнахах та мана улталарӗ, тенӗ. Вӑрçӑ ӗçӗ çӑмӑлах мар, 67 çулти ватӑ фельдмаршал Кутузовӑн сывлӑхӗ чакнӑçемӗн чакса пынӑ та вӑл вара 1813 çулта, апрелӗн 28-мӗшӗнче вилнӗ.

Л. Н. Толстой хӑйӗн «Война и мир» ятлӑ произведенийӗнче Бородино патӗнчи çапӑçу çинчен наполеонла Франци пӗтни çав çапӑçуран килнӗ тесе каласа хӑварать. Вырӑс халӑхӗ 1812 çул хӑйӗн çӗршывне тапӑнса пырса кӗнӗ вӑрӑ-хурахсене тивӗçлипех ӑса кӗртет, хӑйӗн ирӗклӗхне çӑлса юлать. Ют çӗрсене хапсӑнакансем аслӑ халӑхпа тытӑçса пӑхнӑ та хӑйсен пуçӗсене çухатнӑ.

Çавӑн пек пулнӑ 130 çул ӗлӗкрех. Хальхи завоевательсене те—нимӗçсен фашистла йыткӗтӗвӗсене те çавӑн пек шӑпах кӗтет. Александр Невский, Дмитрий Донской, Мининпа Пожарский, Александр Суворов, Михаил Кутузов тӑванӗсем — Хӗрлӗ Çарӑн герой-воинӗсем фашистла захватчиксене хирӗç паттӑррӑн кӗрешеççӗ. Çитӗ вӑхӑт — Наполеонӑн «мухтавлӑ çарне» Кутузов мӗнле аркатса тӑкнӑ, нимӗç вӑрӑ-хурахӗсене те паттӑр Хӗрлӗ Çар, аслӑ полководец Сталин ертсе пынипе, çавӑн пекех аркатса тӑкӗ.

П. ГРИГОРЬЕВ.
Р. СЕМЕНОВ.

Агитаци ĕçĕнчи паха утăмсем

Çĕмĕрле районĕнче ку вăхăтра халăх хушшинчи агитацилле-ăнлантарулла ĕçе 500 агитатор ытла хутшăнса пырать. Аслă Сталин сăмахĕсене кашни ĕççынник чĕрине вырнаçтарас тесе, пирĕн агитаторсем агитациллĕ ĕçĕн нумай тĕрлĕ майĕсемпе усă курса ĕçлеççĕ. Сталин сăмахĕсем ĕççыннисен чĕрисенче тăшмана курайманнине татах та вăйлăнрах чĕртсе çулăмлантараççĕ, çĕршыв оборонине татах ытларах çирĕплетес тесе пĕтĕм вăй, пĕтĕм ăс-хала хурса ĕçлеме чĕнеççĕ.

Юлашки вăхăтра уйрăмăнах Древкомбинатри агитаторсем пикенсе ĕçлени курăнать. Комбинатра вунăшар агитатор шутланать. Вĕсем рабочисем хушшинче калаçусем, вулавсем, докладсем туса ирттереççĕ. Çак майпа рабочисене производствăра хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеме, ĕç тухăçлăхне ытларах та ытларах хăпартса пыма пулăшаççĕ.

Пĕр январьпе февраль уйăхĕсенче кăна комбинатри агитколлектив вăйĕпе 293 калаçу тата 48 доклад туса ирттернĕ. Калаçусене пуринчен ытла отечественнăй вăрçă тематикипе ирттернĕ. Комбинатри агитаторсенчен уйрăмăнах Хитеев, Аюев тата Сорокин юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Асăннă юлташсем хăйсен бригадинче политикăллă информацисемпе калаçусене йĕркеллĕн, пĕр сиктермесĕр туса пыраççĕ. Асăннă агитаторсем производствăра та ытти рабочисемшĕн пример пулса тăраççĕ. Аюев, Хитеев, Конюхова юлташсем хăйсен ĕç нормисене куллен 200-шер процент таран тата ытларах та тултарса пыраççĕ.

Çак комбинатрах агитаци ĕçне Мартынов бухгалтерпа Миронов техноруках туса пыраççĕ. Вĕсем ирттерекен калаçусене рабочисем юратса та тимлесе итлеççĕ.

Каçхи сменăра ĕçлекенсем хушшинчи агитаторсем апат çимелли вăхăтсемпе усă кураççĕ. Рабочисем апат çиме ларсан, вĕсем калаçусем туса ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Çакăнпа пĕрлех комбинатра агитаци ĕçĕнче лозунгсемпе тата плакатсемпе усă курасси те анлăн саралать. Кашни цехрах фронта пулăшма тата тăшмана çапса аркатма чĕнекен лозунгсемпе плакатсем нумай. Çакăнпа пĕрлех тата рабочисем комбинат территорийĕнче организациленĕ «Окна ТАСС» текен карррикатурăсемпе хытă интересленеççĕ.

Комбинат цехĕсенче витринăсем тунă. Ку вăхăтра 10 хаçат витрини тата «Юлашки хыпарсен» 6 витрини пур. «Юлашки хыпарсен» витринисем çине Совет Информаци Бюровĕн уйрăм пĕлтерĕвĕсене çыпăçтарса тăраççĕ.

Комбинат цехĕсенче стена хаçачĕсем тухаççĕ. Рабочисем хăйсен заданийĕсене мĕнле тултарнине те кăтарту хăмисем çине куллен çырса пыраççĕ. Стена хаçачĕсем кăтартнă срокĕсенчех тухса тăрайманни курăнать. Ку çитменлĕхе пĕтерес тесе комбинат партбюровĕ февраль уйăхĕнче стена хаçат редакторĕсен канашлуне туса ирттерчĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинчи массăлла-агитаци ĕçне те чылай вăйлатнă. Çĕмĕрле хулинчи пуçламĕш парторганизацисем агитаторсене уйрăм хваттер çурчĕсем тата общежитисем çумне çирĕплетрĕç. «Большевик» заводри пуçламĕш парторганизаци уйрăм хваттерсемпе общежитисем çумне 11 агитатор, комбинат парторганизацийĕ — 29 агитатор тата хулари çутĕç пайĕ —73 агитатор çирĕплетсе панă. Ку агитаторсем хăйсен массăллă агитаци ĕçĕсене пуринчен ытла килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче туса пыраççĕ. Вĕсем ПВХО нормисен правилисене вĕрентес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тăваççĕ.

Агитаторсене ĕçре пулăшас тĕлĕшпе пуçламĕш парторганизацисем вĕсене пухса семинарсем, канашлусем туса ирттереççĕ. Хулари çутĕç пайĕ çумĕнчи парторганизаци вăрçă вăхăтĕнче агитаторсене пухса 5 семинар-канашлу туса ирттернĕ.

Районра халĕхи вăхăтра хаçат витринисем тăвас ĕç саралать. Районĕпе халĕ 52 хаçат витрини тунă тата Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене çапса тăратмалли хăмасем 27 вырăнта организациленĕ. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсен листовкисене машинăсемпе пичетлесе йышлантараççĕ.

Д. ГУСЬКОВ.



ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн заведующийĕ.

Кок-сагыз акма начар хатĕрленеççĕ

Республикăри чылай колхозсем кăçал хăйсен уйĕсенче кок-сагыз акса çитĕнтерессе. Оборонăшăн питех те кирлĕ çак культурăна акса ÿстересси пирĕн колхозсемшĕн пысăк та чыслă ĕç пулса тăрать. Хăйĕн тымарĕсенче нумай процент каучук тытса тăракан кок-сагыза тăвас çĕршыва ытларах туса панипе эпир çĕршыв оборонин хăватне тĕреклететпĕр. Çапла кок-сагыз акма хатĕрленессин çуракине хатĕрленес ĕçре хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илес тесен, ĕçре специалистсем кирли пуриншĕн те паллă. Çакна шута илсе, Чкаловски районри çĕрĕç пайĕ районри пур колхозсем валли те кок-сагыз тĕлĕшпе ĕçлекен специалистсем—звеньевойсем вĕрентсе кăларчĕ. Вĕсем халĕ колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсене кок-сагыз халăх хуçалăхĕнче, промышленноçра пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен, унăн агротехники çинчен тата унăн тухăçлăхне ÿстернĕшĕн государство колхозсене премии тата ĕçшĕн хушса резина таварсем памалла туни çинчен ăнлантарса параççĕ, кок-сагыза акма çĕр лаптăкĕсем хатĕрлеççĕ. Районри пур колхозсенче те кок-сагыз вăрлăхĕ çителĕклĕ, чылай колхозсем сеялкăсене кок-сагыз акмалла майлаштарнă.

«Майăн 1-мĕшĕ» колхоз кок-сагыз акма хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмах лайăх ĕçлет. Колхоз иртнĕ çул икĕ гектара яхăн çĕр лаптăкĕ çинче кок-сагыз туса илчĕ. Кок-сагыз тымарĕ питĕ тухăçлă пулчĕ. Кашни гектартан 22-шер центнер тымар тухрĕ. Пĕр гектар çинчен пухнă кок-сагыз кăна колхоза 4.500 тенкĕ тупăш пачĕ. Кок-сагыза тухăçлă ÿстернĕшĕн колхоз кок-сагыз акса ÿстернĕ малти гектарăшĕн колхозниксене пама 180 мĕнĕшăр калуш илет.

Анчах та кок-сагыза акма нумай колхозсем кирлĕ пек хатĕрленмеççĕ-ха. «Росткаучукăн» республикăри конторине ертсе пыракан И. Ефимов юлташ пĕлтернĕ тăрăх, кăçал республикăри колхозсенче пурĕ 600 звено организацилемелле. Мартăн 15-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ те 72 звено çеç организациленĕ. Кок-сагыз акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен специалистсем пулма курсĕсенчен 600 çынна вĕрентсе кăлармалла, анчах çав курсĕсенчен пурĕ те 153 çынна çеç вĕрентсе кăларнă. Комсомольски, Вăрмар, Шăхасан, Куславкка тата Первомайски районĕсенче кок-сагыз специалистĕсене хатĕрлеме пачах та тытăнман. Асăннă районсенчи колхозсем кок-сагыз вăрлăхне те «Росткаучук» конторĕнчен турттарса кайман, кок-сагыз акса тăвакан звеносене организациленмен. Комсомольски район çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Казаков юлташ кок-сагыз акакан звеносем валли кĕске срокла курсран специалистсем вĕрентсе кăларас ĕçе тума Шупашкартан агроном ярса парасса кĕтсе ларать.

Шăхасан районĕнче кок-сагыза пурĕ 49 колхоз акса тумалла, вĕсенче 60 звено ытла ĕçлемелле. Анчах кунта та «специалистсем çук» сăлтавпа звеньевойсене ĕçе вĕрентме тытăнман-ха. Пĕр сеялкăна та кок-сагыз акмалла туса майлаштарман.

Кок-сагыз акма хатĕрленес ĕçе халех тивĕçлĕн тытăнмалла. Ку тĕлĕшпе «Росткаучукăн» республикăри конторин те хăйĕн ĕçне вăйлатмалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Пĕвесемпе кĕперсене çуркуннехи шыв çĕмĕресрен сыхлама тăрăшмаççĕ

Кăçал юр тарăн çунă пирки, çуркуннехи шыв пĕвесемпе кĕперсене татса каяс хăрушлăх пур. Çакна шута илсе, шыв илессине хирĕç кĕрешекен чрезвычайнăй тройка районсенчи тата хуласенчи тройкăсене кĕперсемпе пĕвесене, шыв арманĕсене шыв çĕмĕрсе каясран сыхласа хăварма кирлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

Анчах та шыв илессине хирĕç кĕрешме организациленĕ Вăрмар районĕнчи тройка республикăри чрезвычайнăй тройкăн пĕрремĕш номерлĕ приказне пурнăçлас тĕлĕшпе ку таранччен нимĕн те туман.

Кĕперсемпе пĕвесене, шыв арманĕсен пĕвисене çуркуннехи шыв çĕмĕрсе каясран сыхласа хăварас тĕлĕшпе колхозсенче тумалли ĕçсене ертсе пыма районсенче специалистсем— гидротехниксем пур. Анчах Вăрмар райçĕрĕç пайĕн гидротехникĕ Ю. Иванова юлташ хăй те шыв илессине хирĕç кĕрешекен чрезвычайнăй тройкăн пĕрремĕш номерлĕ приказне мартăн 21-мĕшчен вуламан. Çавăнпа та кунта мĕнле те пулин ĕç туни çинчен каламалли те çук.

Районра пурĕ 11 пĕве. Вĕсенчен чылайĕшĕ хавшанă, шыв юхмалли канавсемпе сооруженисене иртнĕ çуркунне шыв çĕмĕрсе кайнăранпах юсаман.

Кавалти «Маяк» колхозра пĕвере тăвăнса тулнă шыва хăварт юхтарса кăлармалли сооружени юсавсăр. Мусырмари «Новая жизнь» колхоз пĕвин шыв юхмалли канавсем çĕмрĕк. Çак пĕвесене кăçал çуркуннехи шыв татса каясран сыхласа хăварас тесен, халех ĕнтĕ пĕве умĕсене йывăç юпасем лартса çирĕплетмелле, материалсен аварийнăй запасне (улăм, тислĕк, чул, çапăсем) çителĕклĕ таран хатĕрлемелле. Анчах асăннă колхозсенче ку ĕçсене тума халĕ те пуçăнман-ха.

Кунсăр пуçне районра 19 шыв арманĕ пур, вĕсенчен 17 арманĕ Эйĕш шывĕ çинче вырнаçса тухнă. Çавăн пирки пĕр арман пĕви татăлни ытти арман пĕвисене те татма пултарать. Кивĕ Мăнтăрти «Исварин», Чулкасри «Свобода» колхозсенчи шыв арманĕсен пĕвисем шанчăклах мар, çуркуннехи шыв тулсанах вĕсем таталма пултараççĕ. Çĕнĕ Кинчер колхозĕн шыв арманĕ те пĕве начар пиркинех ĕçлемест.

Пĕвесемпе шыв арманĕсен пĕвисене, кĕперсене шыв çĕмĕресрен сыхласа хăварас ыйту пĕчĕк ыйту мар. Çавăнпа ĕççынни депутачĕсен Вăрмар районсовет исполкомĕн ку ĕçри çитменлĕхĕсене халех пĕтермелле.

ВĂРМАР. (Хамăр корр.).

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕсем

Пирĕн обязательство—700 гектар

Тракторсене çуракине тухма юсаса çитертĕмĕр. Нумаях пулмасть пирĕн пата Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен тракторсене мĕнле юсанине тĕрĕслеме килчĕç. Тĕрĕсленĕ хыççăн тракторсем паян пулсан паянах çуракине тухма хатĕр пулни курăнчĕ.

Эпир, трактористкăсем, Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсем чĕнсе каланине сÿтсе-яврăмăр, вĕсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, социализмлă ăмăртăва тухрăмăр. Çĕршыва, партипе правительствăна эпир çирĕп сăмах паратпăр, Кăçал уйхирти ĕçсене татах та хастарлăнрах туса пыратпăр. 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа 700 гектар сухаласси пирĕн обязательство пулать. Эпир ăна пурнăçа кĕртесшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр.

Пирĕн бригадăра 4 трактор, 8 трактористка. Эпир пурте трактор ĕçне вĕренсе çирĕппĕн алла илтĕмĕр. Иртнĕ çул ĕçре чăрмавсем пулчĕç пулсан та, М. Анисова, Т. Николаева, М. Кириллова трактористкăсем планпа пăхнă нормăна ăнăçлăн пурнăçларĕç. Уйрăмах машиновед Е. Иванова юлташ лайăх ĕçлерĕ, вăл халĕ те çавăн пекех вăй хурса ĕçлет. Молотилкăна юсанă хыççăн каллех ĕçе ятăмăр. Е. Иванова юлташ авăн çапнă çĕрте хăй ĕçлекен молотилкăпа пин тонна ытла тĕштырă çапса кăларчĕ.

Халĕ эпир çуракине хатĕрленсе, хамăр ĕçлекен колхозсенче плугарьсем, сеялщиксем пулса ĕçлеме уйăрнă çынсемпе ĕçе мĕнле тухасси çинчен калаçусем туса ирттеретпĕр. Вĕсене хамăр пĕлнĕ таран вĕрентме тăрăшатпăр.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвне ăсатса, мана трактористкăсем çапла каларĕç: ĕç мастерĕсен сăмахĕсене, Ульяков, лайăхрах итле, терĕç. Таврăнсан пире каласа парăн, терĕç. Канашлура эпĕ чăнах та манăн уйхирти юлташсем пысăк çитĕнÿсем туни çинчен тата çав çитĕнÿсене мĕнле майсемпе тумалли çинчен пĕлтĕм. Трактористкăсен ячĕпе тата хам енчен те кăçал татах та лайăхрах ĕçлеме сăмах паратăп. Ĕç вăхăтĕнче эпир 4 хĕрачана тракторпа ĕçлеме вĕрентме, кашни тракторпа 700-шер гектар сухалама пулатпăр.

У. НИКОЛАЕВА.
Красноармейски МТС-ри тракторсен бригадин бригадирĕ.

Тухăçлă пахча-çимĕçшĕн кĕрешетпĕр

Вăрçă вăхăтĕнче пахча-çимĕçсем нумай кирли калама сăрах паллă. Çавăнпа та пирĕн, пахча-çимĕç ăстаçисен тата махорководсен, кăçал пахча-çимĕç тухăçлăхне нихăçанхинчен те вăйлăнрах ÿстермелле.

Иртнĕ 1941 çулта эпир пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илтĕмĕр. Пахча-çимĕçсем сутса кăна колхоз 43 пин тенкĕ тупăш илчĕ тата махорка сутса 15 пин тенкĕ илчĕ.

Пахча-çимĕç культурисем туса илмелли планлă заданине эпир ирттерсе пурнăçларăмăр. Çапла манăн бригада вăтам шутпа кашни гектартан 160-шар центнер купăста илмелле пулнă пулсан, эпир 260-шар центнер туса илтĕмĕр, хăяр—270 центнер, помидор—160 центнер, кишĕр—218 центнер, кăшман—180 центнер, арбуз—110 центнер, сухан—130 центнер туса илтĕмĕр тата кашни гектартан 22-шер центнер махорка тухрĕ. Çапла вара государствăна махорка парас плана, пĕрремĕш сортлă махорка парса, 178 процент тултартăмăр.

Пысăк тухăçлă пахча-çимĕç тата махорка туса илесси агротехника хушнă правилăсене çирĕппĕн пурнăçласа пынинчен, пур ĕçе те хăй вăхăтĕнче тата тĕплĕн туса пынинчен килет.

Пысăк тухăçлă тырпул, пахча-çимĕç ĕçлемесĕр пулмасть. Эпир иртнĕ кĕркунне кашни гектар çине 35—40 тонна тислĕк кăларса, кĕрхи çĕртмене сентябрь уйăхĕн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче туса хăвартăмăр. Хĕл уйăхĕсенче бригада членĕсем вырăнти тата минераллă удобренисем турттарса хатĕрлерĕç, парниксен рамисене юсарĕç, улăм кĕççесем сыхрĕç.

Тăватă çул хушши ĕнтĕ эпир вырăнти «Семеновка» сортлă махоркăна лартса тăватпăр. Махорка калчисене парниксенче çитĕнтеретпĕр. Вăрлăха чĕмĕлентерсе апрель уйăхĕн варринче акатпăр. Акнă хыççăн кайăк-кĕшĕк тислĕкĕнчен е минераллă удобренирен тунă шĕвексемпе шăварса тăратпăр. Çумкурăкĕсене тăтăшах çумласа тăратпăр.

Махорка калчи 5—6 çулçă кăларнă хыççăн ăна çĕр çине куçарса лартатпăр. Калчасене куçарса лартас умĕн çĕре çемçететпĕр. Кашни гектар çине 5 центнер суперфосфат, пĕр центнер сульфат-аммони, 3 центнер кали тăварĕ хуратпăр. Çу уйăхĕсенче махоркăна икĕ хутчен апатлантаратпăр; пĕррехинче—кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хутшăнтарнă шывпа, иккĕмĕшĕнче минераллă çăнăхсем хутшăнтарса тунă шывпа. Йăрансен хушшисене 6 хутчен çемçететпĕр, 5 хутчен купалатпăр тата çеçкесен тăррисене татса тăратпăр. Махоркăна ир тата кĕске срокра лартсан, вăл пĕр вăхăтра та тикĕс çитĕнет.

Кăçалхи çуракине эпир пĕтĕмпех хатĕр. Вырăнти тата минераллă удобренисене çителĕклĕ таранах хатĕрлерĕмĕр, парниксем вăрлăх йышăнма хатĕр.

1942 çулта пирĕн пур культурăсене те пысăк тухăçлăн туса илмелле. Çакăншăн эпир ывăнма пĕлмесĕр кĕрешетпĕр. Эпир туса илнĕ кашни ытлашши килограмм пахча-çимĕç, тĕштырă—этемлĕхĕн тăшманне—гитлеризма çапса çĕмĕрнĕ çĕре кайĕ, ăна пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартас вăхăта çывхартĕ.

И. СИДОРОВ,
Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» колхозăн пахча-çимĕç мастерĕ.

Комсомолăн ĕçне вăйлатмалла

КАНАШ. Комсомолăн Вăтакас-Тапăш ялсоветне кĕрекен колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем [illegible] çук начар ĕçлеççĕ тесен те йăнăш пулмасть. Чкалов ячĕпе тăракан колхозри организацире комсорг пĕр пĕччен тăрса юлнă. Икĕ комсомолец, билет илме кайнăскер, комсомолтан тухса ÿкнĕ. Николаева юлташ комсомолецсен пухăвĕ хăçан пулнине астумасть. Туллимар вăтам шкулта икĕ комсомолец тăрса юлнă. Апла пулсан та комсорг Седова комсомол йышне ÿстерессишĕн нимĕн те тăрăшмасть. Çавна пула та ĕнтĕ пионерсемпе ĕçлесси те япăх. Шкул ачисен—Ярансков, Артемьев, Новиков, Степанов, Константинова, Капитонова тата ыттисен те комсомола кĕме çул çитнĕ. Анчах та комсорг Седова пионерсенчен комсомола кĕме хатĕрлесси çине ытла та сÿрĕккĕн пăхать. Райкомолтан паракан директивĕсемпе отношенисем уншăн кăтарту мар. Райкомол пухакан канашлусене каймасть, пухнă член укçине те 3—4 уйăх хушши тÿлемесĕр тытса тăрать. «Динамо» тата «Париж Коммуни» колхозсенчи комсомол организацийĕсем те хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ. Хуçалăхпа политикăллă кампанисене сахал хутшăнаççĕ.

Т. ТУРХАН.

Вăрман хатĕрлев планне ытлашшипех тултарчĕç

ИШЛЕЙ. Ярапайкасси ялсоветне кĕрекен «Коммунизм», «Автогигант» тата «Мировой Октябрь» колхозсем кăçалхи вăрман хатĕрлев ĕçне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Вĕсем вăрман хатĕрлес тата турттарас тĕлĕшпе хăйсене панă заданисене ытлашшипех тултарчĕç. Сăмахран, «Автогигант» колхоз 100 кубометр турттарас вырăнне 138 кубометр турттарса пачĕ. Вăрман турттарас ĕçре уйрăмăнах Н. Майоров, Е. Андреева, Ф. Филиппов, Н. Лукина тата П. Горбунов колхозниксем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсене панă заданисене кулленех 120—125 процент тултарса пычĕç.

П. ЯКОВЛЕВ.

Тăвай МТС-ĕнчи трактористкăсем ăмăртăва хутшăнчĕç

Тăвай машинно-тракторнăй станцинчи трактористкăсем, Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сÿтсе явса, трактористкăсен социализмлă ăмăртăвне хутшăнчĕç. Хăйсем çине вĕсем 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа кăçал 700-шер гектар сухалама обязательство илчĕç, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме ăмăрту договорĕсем турĕç.

Трактористка Анна Иванова ХТЗ-СТЗ тракторпа хăйĕн сменинче 350 гектар çĕр сухалама, ĕç вăхăтĕнче 2 хĕрачана тракторпа ĕçлеме вĕрентме тата горючине 5 процент перекетлесе хăварма обязательство илчĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Çамрăк выльăхсене контрактацилеççĕ

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени халăх хуçалăхĕнче пысăкран та пысăк вырăн йышăнса тăракан политикăллă документ пулса тăрать.

Çак постановление ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре çамрăк выльăхсене контрактацилесси пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн районри колхозсем выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстерес ĕçе çакăнтан тытăнчĕç те ĕнтĕ. Районĕпе пурĕ çамрăк выльăхсене 1840 пуç контрактацилеме палăртнă, вăл шутра 1140 пăру, 700 путек. Мартăн 25-мĕшĕ тĕлне 1226 пăру, 503 путек контрактациленĕ.

«Память Ленина» колхоз 63 пăру, 10 путек, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 47 пăру, 17 путек контрактациленĕ. Çавăн пекех «День урожая» колхоз та 33 пăру, 20 путек, «Жнейка» колхоз 33 пăру, 15 путек контрактациленĕ.

Анчах çак кирлĕ мероприятие калламан колхозсем те пур-ха. Тĕслĕхрен, «Новая жизнь» колхозăн фермисенче сурăхсен хисепĕ планпа пăхнине çитмест пулсан та, паянхи куна пĕр путек те контрактацилемен. Çавăн пекех «Авангард» колхоз та фермăра сурăхсен хисепне планпа пăхнине çитереймен-ха.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана, вăрçă вăхăчĕ кăларса тăратнăсене тултармалла кăна мар, ăна ирттерсе пурнăçлас пулать. Çавăншăн парти организацийĕсемпе выльăх-чĕрлĕх работникĕсен кĕрешмелле. Выльăхсене пăхакан кашни çыннăн хăйне шанса панă ĕçе пĕтĕм вăйне хурса, тÿрĕ кăмăлпа туса пымалла.

М. КУЗЬМИН.
ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени çине колхозсемпе колхозниксем çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕçе вăйлатнипе ответлеççĕ. План тăрăх кăçал районĕпе пурĕ 1000 пăру контрактацилемелле. Мартăн 25-мĕш тĕлне 1007 пăру контрактациленĕ. Ку ĕçе уйрăмăнах Арапуç колхозĕ (колхоз председателĕ Малахеев юлташ) лайăх организациленĕ. Унта 20 пăру контрактацилес вырăнне 27 пăру контрактациленĕ.

Анчах районра колхозсен сурăх фермисене пухса йĕркелеме сурăхсемпе качакасен путекĕсене контрактацилес ĕç юлса пырать. Паянхи кун тĕлне пурĕ те 579 путек çеç контрактациленĕ (планпа 1500 путек контрактацилемелле).

* * *

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăва ялсоветне кĕрекен колхозсем çамрăк пăрусене контрактацилеççĕ. Çак кунсенче «Сатурн» колхоз 33 пăру, «Ново-Чурино» колхоз 17 пăру, «Звезда» колхоз 7 пăру контрактацилерĕç.

П. Д.

Япаласене дезинфекциленĕ çĕрте мунчасемпе усă курасси

Вăрçă вăхăтĕнче час-часах шатраллă (сыпной) тиф чирĕ вăйлăн саралма пултарать. Шатраллă тиф пыйтăсем урлă саралать. Тиф чирĕ ан саралтăр тесен, пуринчен малтан пыйтăсене пĕтермелле. Вара сикекен шатраллă тиф саралас хăрушлăх та пĕтме пултарать. Çакна астуса тăрса, пирĕн хальхи вăрçă вăхăтĕнче кашни çыннăнах пыйтăсене пĕтерме тăрăшмалла.

Халăх сывлăхне сыхлакан организацисем пыйтăсене пĕтерме дезинфекципе дезинсекци камерисем уçаççĕ, кун пек камерăсемпе больницăсенче тата шатраллă тиф саралнă вырăнсенче усă кураççĕ. Анчах та çакăн пек камерăсем килçуртри, çемьери пыйтăсене хирĕç кĕрешес ĕçре çителĕклĕ мар. Мĕншĕн тесен, ун пек камерăсем вĕсем сахал тата вĕсен пысăкăшĕ те нумай япалана шăнăçтарма пултараймасть. Çакна шута илсе, халăх пурăнакан пунктсенче пур çĕрте те «пыйтă пĕтермелли землянка-камерăсем» тумалла. Пыйтă пĕтермелли ахаль йышши камера тума йывăр мар тата вăл хакла та лармасть. Çавăнпа та ăна кашни ялтах, кашни пĕчĕк предприятирех тума пултараççĕ. Ун пек землянка-камерăсене часах тума май пуррине эпир Чăваш республикин чылай районĕсенче курма пултаратпăр. Тĕслĕхе вăрмансăр Елчĕк районне илер. Ку районра пĕр уйăх хушшинчех 28 землянка-камера туса лартрĕç.

Землянка-камерăсене туса пынипе пĕрлех, пыйтăсене пĕтерес тĕлĕшпе уйрăм хуçалăхсенчи мунчасемпе те усă курма пулать. Кунта хура мунча пулсан та юрать, 1931 — 1934 çулсенче пыйтăсене хирĕç кĕрешнĕ чухне эпир çавăн пек уйрăм хуçалăхсенчи пĕчĕк мунчасемпе çеç усă куртăмăр. Нумай мар япалана кирек мĕнле мунчара та хĕртсе ăшалама пулать, анчах та мунчине çителĕклĕн хутса вĕрилентермелле. Çавăн пек мунчара чи малтан кăмаки тата кăмака çине купаланă чулĕсем епле хĕрнине, мунчи ăшĕнче вĕри пур çĕрте те пĕр пек тытăнса тăнипе тăманнине тата вĕри мунчара мĕн вăхăт тăма пултарнине сăнаса пĕлмелле.

Мунча ăшчикĕ йĕри-таврах çăттăн питĕрĕнсе тăни кирлĕ, пур шăтăк-çурăка та тĕплĕн питĕрмелле, сĕрсе, çыпăçтарса лартмалла.

Япаласене вĕри çĕре çакса ăшалантарма мунчара çÿле йĕри-таврах каштасем хумалла. Çав каштасене тытса тăма, землянка-камерăсенчи пекех, стенасем çумне планкăсем çапса лартмалла. Хура мунчара пулсан, мунчине хутнă вăхăтра шăлчисене тула кăларса тăратас пулать, унсăрăн вĕсем хăрăмланма пултараççĕ.

Çакăн пек сиплесе лартнă мунчасенче, лайăх хутса хĕртсен, кирек мĕнле кĕпе-йĕм тавраш не те, çавăн пекех тата çăмран е тиртен çĕленĕ тумтирсемне ытти çăм япаласене те хĕртсе вĕтелеме юрать. Малтанах сăнавлă ĕçе тунă чух термометр тăрăх температура епле тăнине тĕплĕн тĕрĕслесе пымалла, термометрне мунча алăкĕ çине (шал енчен) çакмалла. Çак термометрпах мĕн çуллĕшĕнче мĕнле вĕри тăнине те пĕлме кирлĕ.

Малтан типĕ вĕрипе мачăклă тир япаласене çакса дезинфекцилемелле. Каярахпа, мунчари вĕри сивĕнме пуçласан, сÿсрен е ваткăран тунă тата çăмран тунă тумтирсемпе япаласене çакмалла. Вĕсене хĕрнĕ чул çине шыв сапнипе тухакан вĕри пăспа пĕçертме те пулать. Мунчари типĕ вĕри шыв пăсĕпе нÿрелсен, вăл япаласене дезинфекцилес тĕлĕшпе сиплĕ япала пулса тăрать. Мунча чулĕ часах ан сивĕнтĕр тесен, ун çине вĕри шыв çеç сапмалла. Тиртен тунă япаласем, вĕри çинче ытлашши тăрсан, пĕрĕнсе ларса пăсăлма пултараççĕ, çавăнпа та вĕсене асăрханса пĕçертмелле.

Пирĕн мунчасен пур çĕрте те пĕрер алăк анчах: çавăнпа та вĕрире çакса дезинфекциленĕ тумтирсене илсе тухнă чух вĕсене хĕртсе тасатман тумтирсемпе (кĕпе-йĕмсемпе тата ыт. те) çыпăçтарасран сыхланмалла. Ятарласах дезинфекци валли тăвакан мунчасен икĕ енчен икĕ алăк пулмалла. Пĕр алăкĕнчен тасатнă тумтирсене илсе тухмалла, тепринчен тасатмаллисене илсе кĕмелле. Тасатнă япаласене нихăçан та дезинфекцилесе тасатман япаласем выртнă çĕре хума юрамасть, вĕсене уйрăм тытмалла, тасатнисене мунча умĕнчен тÿрех аякка илсе кайни татах та авантарах.

Япаласене вĕрилентерсе хĕртекен çын пĕччен пулсан, унăн икĕ халатпа усă курма тивет; тасатнă япаласене йăтнă чух таса халат тăхăнмалла пулать, тепĕр халатне тасатман япаласене камерăна илсе кĕрсе вырнаçтарнă чухне тăхăнмалла.

Хĕртме çакас умĕн тумтир кĕсйисене пурне те таварса хумалла; тиртен çĕленĕ тумтирсенне çаннисене те таварса хумалла пулать. Вут хыпасран хăрамалла япаласене—спичкăсене, гутаперч турасене, çуллă тумтирсене вĕри çĕре хĕртме юрамасть.

Япаласене шалчаран тунă каштасем çине е юриех тунă çекĕлсем çине саркаласа çакмалла, вĕсем пĕр-пĕрин çинче купаланса тăма кирлĕ мар.

Япаласене çакса пĕтерсен, ку ĕçе тăвакансен чул çине шыв сапмалла та, мунчаран хăвăрт тухса алăка çăттăн хупса лартмалла. Тухсанах çири халата улăштармалла.

Мунчари япаласене температура вĕрилĕхне тата тасатакан япаласен нумайĕшне кура, 20 минутăран пуçласа 40 минута таран тытса тăмалла. Дезинфекци валли температура 75—80 градус таран вĕри пулмалла. 20—40 минута хыççăн мунчаран илсе тухнă япаласем çинче пыйтă пурри-çуккине лайăххăн пăхмаллла.

Чĕрĕ пыйтă е чĕрĕ шăрка çук пулсан, тумтирсене сиплесе шаккамалла та хăйĕн хуçисене памалла. Чĕрĕ пыйтă-шăрка тупăнсан, япаласене каллех дезинфекцилемелле пулать. Шăрка виллине е чĕррине çакăнтан пĕлме пулать: виллĕ пулсан, вăл хăмăр тĕслĕн курăнать тата типшĕрсе ларать.

Дезинфекци ĕçне пĕтернĕ хыççăн мунча урайне шăлса тасатмалла та пĕтĕм çÿп-çапа йăлтах мунча кăмакине пăрахмалла.

Мунчара пĕр килти япаласене çеç хĕртсе тасатнă пулсан тата пыйтăсене шатраллă тиф çук вăхăтра пĕтернĕ пулсан, вăл мунчара шăлса тасатнă хыççăнах кирек хăçан та çăванма пултарать. Тифлă пыйтăсене вĕрилесе хĕртнĕ мунчара салтăнса çăванма, мунча кĕме юрамасть.

П. Н. ЖУРИН.
Чăваш АССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн эпидемисене хирĕç кĕрешекен управленин начальникĕ.

ĔÇЕ ХĔРАРĂМСЕМ ТĂЧĔÇ

ЕЛЧĔК. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç тытăçакан вăрçă фронтне кайнă çынсем вырăнне ĕçе хĕрарăмсем тăчĕç.

«Звезда» колхоз председателĕ Г. Волков юлташ Хĕрлĕ Çар ретне кайсан, унăн вырăнне колхоза ертсе пырас ĕçе М. Федорова юлташ йышăнчĕ. Çавăн пекех фронта кайнă çынсем вырăнне счетовод ĕçне туса пыма Ф. Смирнова, бригадир пулса ĕçлеме Е. Поликарпова, фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлеме В. Николаева, кладовщик пулса ĕçлеме А. Николаева юлташсем тăчĕç.

Колхозăн хастарлă хĕрарăмĕсем хĕрÿллĕн, пултаруллăн ĕçлеççĕ. Колхоз иртнĕ çул 139 гектар çинчен тырпул пухса кĕчĕ. Çак çитес 3—4 кун хушшинче колхоз авăн çапас ĕçе пĕтĕмĕшпех туса çитерет. Колхозниксемпе колхозницăсем хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Уя 100 тонна тислĕк кăларнă. 20 центнер кĕл пухнă. Уйăрса хунă вăрлăхлăх тырра çуррине ытла сортланă, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ.

П. ДОКТОРОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Апрелӗн 1-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӗвӗн вӗҫӗ

Гитлеровецсен ҫавӑн пек вӑрӑ-хурахла хырҫисене Германири халӑх тӑшманла кӗтсе илнӗ.

Анчах халӑха ҫавӑн пек уҫҫӑнах ҫаратни те фашистсен пушанса ҫитнӗ ҫар бюджечӗнчи шӑтӑксене питӗрме май паман. Германире пурӑнакан ҫынсем урӑх нимӗнле тавар та илме пултараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен таварсем ӗнтӗ рынокисенчен таҫҫанах ҫухалнӑ. Гитлеровецсене шанмасӑр, гитлерла система арканса каяссине туйса тӑрса, нимӗҫсем хӑйсен юлашки укҫисене пытарса хӑвараҫҫӗ, вӗсене перекет кассисене парассинчен пӑрӑнаҫҫӗ. Германи правительстви хӑйӗн вӑрӑ-хурахла ҫӗнӗ распоряженине ҫавна пула кӑларнӑ та ӗнтӗ. Ҫав распоряжени гитлеровецсене халӑхран унӑн ахаль те чухӑн пурлӑхӗсене тӑпӑлтарса илме анлӑ майсем туса парать. Ҫав законпа усӑ курса, гитлерла правительсем кирек мӗнле нимӗҫрен те унӑн юлашки укҫи-тенкине илсе тухса кайма пултараҫҫӗ, ӑна укҫа-тенкӗ пытарнӑ тесе айӑпласа каторгӑна яма пултараҫҫӗ. Ҫав закон гитлерла Германире шалти политикӑллӑ лару-тӑру татах та ытларах ҫивӗчленесси патне илсе пырать. Ҫавӑн пекех тата пӗр иккӗленмесӗрех ҫакна калама пулать: темиҫе вуншар пин нимӗҫе каторгӑна яни гитлерла Германин экономикине арканса каяссинчен сыхласа хӑварма пултараймасть. Гитлерла Германин экономики хӑй арканса каяс ҫӗрелле мӗнпур вӑйӗпех вӑркӑнса пырать.

Май уменхи ӑмӑрту

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳсет

ҪӖМӖРЛЕ. Предприятисемпе промысла артелӗсенче май уявӗ уменхи ӑмӑрту сарӑлса пырать. Рабочисемпе работницӑсем, уява чаплӑ ҫитӗнӳсем туниле кӗтсе илес тесе, хӑйсем ҫине татӑклӑ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Древкомбинатра чылай цехсем халӗ хӑйсен планӗсене ытлашшипех тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Ремонтпа-механически, хӑма ҫуракан цехсем хӑйсене панӑ заданисене тӑтӑшах 105—110 процент тултараҫҫӗ. Ку цехсенчи сменӑсемпе бригадӑсем тата уйрӑм рабочисем хушшинче ӑмӑрту сарӑлнӑҫемӗн сарӑлса пырать. Хӑма ҫуракан цехра пур бригадӑсем те плана 120 процентран кая мар тултараҫҫӗ. Паллӑ стахановец Василий Ширяев ертсе пыракан бригада мартӑн 15-мӗшӗнчен пуҫласа кашни кунах задание икӗ хут тултарса ӗҫлет. Комсомолка Ксения Даниловапӑ Фекла Степанова бригадисем те плана куллен 150—160 шар процент тултараҫҫӗ.

Юлашки эрнере ытти производствӑра рабочисем те ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе ӗҫлени палӑрать. Двухсотниксем Н. Суков, Большаков, Куропаков, Мурова, Шапошникова юлташсем ответлӑ заданисене пурнӑҫланӑ ҫӗрте куллен 2,5—3 норма тӑваҫҫӗ. Сӑмахран, сборщик Большаков юлташ мартӑн 2-мӗш кунӗнченехихӗнче нормӑна куллен 275 шер процент тултарса ӗҫленӗ, маляр Мурова юлташ уйӑх ҫурӑ хушшинче тумалли ӗҫе 20 кун хушшинче тунӑ.

«Труженик» заводра уйрӑмӑнах столярно-мебельнӑй цехри рабочисем тухӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Ку цех февраль уйӑхӗн планне ытлашшипех тултарнӑ. Уйрӑм стахановецсем Н. Пантюшин, Н. Сергеев, В. Шапкин, А. Кондратьев хӑйсен нормисене 150—200 процент таран тултараҫҫӗ. Вӗсем, май уявӗ уменхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, уявччен татах те пысӑкрах ӳсӗмсем тума, продукцие отлично пахалӑхпа ҫеҫ туса кӑларма пулеҫҫӗ.

Февраль уйӑхӗн планне иртгерсе тултарнӑ «Лесфуб» артельпе механизацинӗ арман тата пекарня коллективӗсем те март уйӑхӗнче хӑвӑртлӑхсене ӳстерчӗҫ, вӗсем кашниех уйӑх планне тултарнӑ. Пекарьнӑри стахановецсем Асеркин, Емельянова, Сырова, Бундина юлташсем кашни уйӑхрах хӑйсен ӗҫ нормисене 120 процентран кая мар тултараҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

Цехран тухмасӑр тӑватшар смена ӗҫлеҫҫӗ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисем, Сталин юлташ пӗтӗм ӗҫе фронт интересӗсемшӗн туса пыма чӗнни ҫине ӗҫпе ответлесе, кунран кунах патриотла ҫӗнӗ ӗҫсем тӑваҫҫӗ. Нумаях пулмасть Бойко юлташ ертсе пыракан рабочисем васкавлӑ задани илнӗ. Вӗсем ҫав задание пурнӑҫлачченех цехран тухмасӑр виҫшер смена ӗҫленӗ. Монтажниксен бригадирӗ Ермолаев, Архипов, Чумаков рабочисем те, васкавлӑ задани илнӗ хыҫҫӑн цехран тухмасӑр тӑватшар смена ӗҫлесе, ӑна срокчен пурнӑҫланӑ.

Заводри рабочисем хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене пысӑк хастарлӑхпа пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Токарь-коммунист Бельский юлташ кулленхи нормӑна 200 процент тултарса ӗҫлеме обязательство илнӗ. Халӗ вӑл кулленхи нормӑна 350—400 процент таран тултарса пырать. Ҫакнашкалах фрезеровщик Гурьянов, разметчик Керекеза, молотобоец Лашманов юлташсем те кулленхи нормӑна яланах 3—3,5 хут ирттерсе тултараҫҫӗ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Фашистсен провокациллӗ суйине Иран халӑхӗ ӗненмест

ТЕГЕРАН, мартӑн 30-мӗш. (ТАСС). Гитлерӑн Ирана чуралӑха кӗртсе ӳкерес тата ӑна нимӗҫсен фашистла агрессийӗн хӗҫпӑшаллӗ туса хурас планӗсем путланса ларнӑ хыҫҫӑн, нимӗҫсемпе итальянецсен Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи агентури тата вӗсен пропаганда аппарачӗ Иранри лару-тӑру тӗлӗшпе суяпа элек кампанийӗ пуҫарса ячӗҫ. Кунран кун вӗсем пӗр элек хыҫҫӑн тепӗр элек сараҫҫӗ, Иранри «выҫлӑх» ҫинчен, ҫӗршыври темӗнле «йӗркесӗрлӗхсем» ҫинчен тата ытти пулман япаласем ҫинчен сӳпӗлтетеҫҫӗ. Фашистсен элекӗ ҫавтери ухмахла пулнинчен Иранри радио итлекенсем тӑрӑхласа кулаҫҫӗ кӑна. Ҫапла, сӑмахран, Берлинри радио Форуги сухалнӑ тесе тӗлӗнтермӗшле пӗлтерӳ панӑ. Ҫав вӑхӑтрах Форугине шах правительствин министрӗ пулма уйӑрса лартнӑ, вӑл Тегеранра пурин куҫӗ умӗнчех ӗҫлекен кӑна пурӑнать. Фашистла радио кӗтмен ҫӗртен Иран шахӗн арӑмӗ Египета тухса тарнӑ тесе пӗлтернӗ. Ҫакӑ ухмахла элеке сарнӑ хыҫҫӑн тепӗр кунне тенӗ пекех шахӑн арӑмӗ, хӑйсен тӑванӗсем патне хӑнана кайнӑскер, Англи самолечӗ ҫинче Тегерана таврӑннӑ. Кунта ӑна столицӑра пурӑнакан нумай ҫынсем кӗтсе илнӗ. Ҫавӑн пекех Геббельсӑн пропаганди Иранри «выҫлӑх» ҫинчен, союзниксем ҫӗршывран мӗнпур тулӑпа продовольствие «турттарса тухса кайни» ҫинчен калакан халапсемпе те хӑйне хӑех ҫаптарать. Нимӗҫсем шухӑшласа кӑларнӑ япаласем суя пулнине курса ӗненес тесен, Иран столицин урамӗсем тӑрӑх утса тухни те ҫителӗклӗ. Кунта суту-илӳ татти-сыпписӗр пырать. Иран столици тулли пурнӑҫпа пурӑнать. ССР Союзӗпе Англия союзлӑ Иран ҫӗршывне экономикӑллӑ пулӑшу парса тӑраҫҫӗ. Ҫав пулӑшӑва пула Иран правительстви снабжени тӗлӗшпе уйрӑм районсенче тухса тӑнӑ йывӑрлӑхсене пӗтерме пултарчӗ.

Суркунне акса хӑвармалли ҫӗр лаптӑкӗсене сарас тата ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерес тӗлӗшпе Иран правительстви пысӑк мероприятисем туса ирттерет. Иранри хаҫатсем халӑха ҫӗрӗҫне пур енӗпе те пулӑшма чӗнекен, ирӗклӗ тата юрӑхлӑ кашни ҫӗр лаптӑкне сухаласа ҫемҫетме, кашни ҫӗр лаптӑкӗпе продовольстви культурисем акмашкӑн усӑ курма чӗнекен ӳмстатьясем пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав задача ҫинех тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхма чӗннӗ шах ҫӗнӗ ҫул ячӗпе радио тӑрӑх тухса каланӑ хӑйӗн сӑмахӗнче. Ҫав задачӑна пурнӑҫа кӗртес ӗҫре ССР Союзӗ Ирана пулӑшу панӑ. Уйрӑмӑн илсен, Иран правительстви ыйтнине тивӗҫтерсе, ССР Союзӗн правительстви Ирана 1500 тонна тулӑ вӑрлӑхӗ панӑ. Пехлеви портне вӑрлӑхлӑх туллӑн малтанхи ушкӑнӗ пырса ҫитнӗ те ӗнтӗ.

ССР Союзӗпе Великобритани тата Иран хушшинчи союзлӑ договорӑн ырӑ результачӗсене, ҫӗршыври пурнӑҫӑн йӗркеллӗ виҫине тытса пыма май параканскерсене, Иранра пурӑнакан кашни ҫын туйса тӑрать. Ҫавӑнпа та Иран халӑхӗ фашистла провокаторсен ухмахла суйипе элекӗнчен тӑрӑхласа кулать кӑна.

Германи предприятийӗсенчи пӑлханусем

БЕРН, мартӑн 31-мӗш. (ТАСС). Берлинран килнӗ хыпарсем тӑрӑх, Германи влаҫӗсем ҫар заводӗсенче полици тӗлӗшпе тӑвакан мероприятисене вӑйлатаҫҫӗ. Германири хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, мӗнпур предприятисенче саботажа хирӗҫ кӗрешме ятарласа «полици комиссийӗсем» тӑваҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра заводсенче штурмовиксен СА текен хӗҫпӑшаллӑ отрячӗсене вӑйлатнӑ. Ҫав шутпа ҫар влаҫӗсемпе калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх, оккупациленӗ ҫӗршывсенчен СА чаҫӗсене вӗсемпе «шалта усӑ курма» чӗнсе илеҫҫӗ. Пӗлекен ҫынсем каласа панӑ тӑрӑх, СА членӗсемпе полици отрячӗсем урамри кӗрешӗвӗн меслечӗсене вӗренсе алла илес тӗлӗшпе тӑтӑшах занятисем туса ирттереҫҫӗ. Берлинри урамсенче, рабочисем пурӑнакан Веддингпа Ҫӗнӗ Кельн кварталӗсенче иртен пуҫласах баррикадӑсем тӑваҫҫӗ, ҫуртсен ҫийӗсем ҫинче пулеметсем вырнаҫтарса лартаҫҫӗ. Ҫав «упражненисене» юри рабочисен сменисем улшӑннӑ вӑхӑтра, вӗсене «полицин вӑй-хӑватне» кӑтартса парас шутпа туса ирттереҫҫӗ.

Нимӗҫсен хулисенче лару-тӑру ҫивӗчленсех пырать. Халӑх тарӑхни уйрӑмӑнах ҫӑкӑр паекӗсене чакарнӑ пирки вӑйланса пырать. Хаҫатсем «уйрӑм районсенче пӑлханусем пулассипирки» асӑрхаттараҫҫӗ, Эссенри «Националь цейтунг» хаҫат рабочисене хӑратса, «кам хӑйӗн тивӗҫлӗхӗ ҫинчен манса каять, ӑна ҫавӑн ҫинчен вӑйпа аса илтерӗҫ», тесе ҫырать. Кунта илнӗ хыпарсем тӑрӑх, Эссен хулинче ҫак кунсенче рабочисен пӑлхавӗсем пулса иртнӗ. Рабочисем унта ҫӑкӑр нормисене ӳстерме ыйтнӑ. Заводсен стенисем ҫинче татти-сыпписӗр ҫакӑн пек ҫырса хӑварнисем тӗл пулаҫҫӗ: «Парӑр пире ҫӑкӑр!», «Тӗп пултӑр вӑрҫӑ тата Гитлер!».

Германири ҫар предприятийӗсене эвакуацилени

ЦЮРИХ, мартӑн 31-мӗш. (ТАСС). Дюссельдорфран халь кӑна килсе ҫитнӗ Швеци инженерӗ ҫапла пӗлтернӗ: нимӗҫсен влаҫӗсем чылай ҫар предприятийӗсене Германин ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайӗнчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ районӗсене куҫараҫҫӗ. Ҫар промышленноҫӗн пӗр пайне Чехословакире, Тури Силезире вырнаҫтараҫҫӗ. Уйрӑм заводсене татах та шаларах куҫараҫҫӗ. Швед инженерӗ каланӑ тӑрӑх, нимӗҫсем ҫак мероприятисене тунине икӗ сӑлтавпа ӑнлантарса параҫҫӗ: Англи самолечӗсем вӗҫсе килсе тапӑнасси вӑйланнипе пула, ҫар промышленноҫне арканасран сыхласа хӑвармалла, теҫҫӗ вӗсем, тепӗр енчен тата ҫар промышленноҫне Балканри чӗр тавар базисем патне ҫывӑхарах илсе пымалла, теҫҫӗ. Германири промышленниксен ушкӑнӗсем ҫар заводӗсене ҫавӑн пек эвакуацилени вӑрҫӑ материалӗсем туса кӑларассине татах та ытларах вӑйсӑрлатассинчен шикленеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата Францири хӑшпӗр ҫар заводӗсене те нимӗҫсем кӑнтӑр еннелле илсе кайма шутлани ҫинчен калакан хыпарсем сарӑлаҫҫӗ.

Бирмӑри лару-тӑру

ЛОНДОН, мартӑн 31-мӗш. (ТАСС). «Таймс» хаҫатӑн корреспонденчӗ Мандалайран ҫапла пӗлтерет: Тоунгу районӗнче, Китай войскисем кӗрешнӗ ҫӗрте, японецсем каллех флангсенчен ҫаврӑнса кӗмелли хӑйсен юратнӑ тактикипе ӑнӑҫлӑн усӑ курнӑ. Японецсен патрулӗсем Тоунгуран ҫурҫӗр еннелле каякан ҫула икӗ пунктра пӳлсе лартнӑ, анчах ҫав патрульсенчен пӗрне халӗ ӗнтӗ пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Японецсем Бирмӑна самолетсем нумай янӑ. Вӗсем, пысӑк наступление хатӗрленнӗ май, Англин аэродромӗсем ҫине вӗҫсе пыра-пыра вӑйлӑн тапӑнаҫҫӗ. Японецсем Тоунгу фронтӗнче Китай войскисене хирӗҫ хӑйсен тӗп вӑйӗсене пухни ӗнтӗ уҫҫӑнах палӑрать, вӗсем кунта ҫӗнтерсен англичансене фронтӑн Правадски участокӗнче татах та каярах чакма, нефть промыслисем еннелле чакма тивнӗ пулӗччӗ.

Китайӑн Бирмӑри войскисен ҫӗнӗ командующийӗ Стилуэлл генерал корреспондентпа калаҫнӑ чухне ҫакна уйрӑмӑнах палӑртнӑ: халӗ,—тенӗ вӑл,—чи пысӑк ыйту вӑл союзниксен Бирмӑри войскисем валли ҫар материалӗсем тӑратасси пулса тӑрать. Рангуна панӑ хыҫҫӑн материалсем турттарса пыма самаях йывӑрланнӑ, анчах та ку тӗлӗшпе ӗҫсем хуллен-хуллен лайӑхлансах пыраҫҫӗ.

ЛОНДОН, мартӑн 31-мӗш. (ТАСС). Рейтер агенствин корреспонденчӗ Чунцинран пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин Бирмӑри войскисен командующийӗ — генерал-лейтенант Александер Чунцина пырса кайнӑ. Унта вӑл Чан Кай-шипе Бирмӑри лару-тӑру ҫинчен канашланӑ.

Китайӑн Бирмӑри войскисен ӗҫӗсем ҫинчен каланӑ чухне Александер Китай войскисене пысӑк хака хурса пахаланӑ, вӗсен хӑюлӑхне, паттӑрлӑхне, лайӑх дисциплинине палӑртнӑ. Китай пулӑшӑвӗ Тоунгуна ҫитнӗ пулсан та, ку пунктра ӗҫсем ҫаплах япӑх-ха. Ҫапӑҫусем хулан хӗвеланӑҫ, кӑнтӑр тата ҫурҫӗр енчи тулашӗсенче пыраҫҫӗ.

Агентствӑн корреспонденчӗ илнӗ сведенисем тӑрӑх, Японин Бирмӑри войскисем ҫакӑн пек вырӑнсенче кӗрешеҫҫӗ: пӗр дивизи, Таи войскисен чаҫӗсемпе вӑйланнӑскер, Бирмӑпа Таи хушшинчи чикӗ тӑрӑх тӑсӑлса кайнӑ, тепӗр дивизи фронтӑн Ситтанг участокӗнче кӗрешет, пӗр дивизи Иравади фронтӗнче, пӗр дивизи Моулмейнӑра резервра тӑрать.

Чехословакипе Мексика хушшинче дипломатиллӗ ҫыхӑну тепӗр хут пуҫланса кайнӑ

ВАШИНГТОН, мартӑн 30-мӗш. (ТАСС). Чехословакин дипломатиллӗ миссийӗ Вашингтонра пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Пӗлтерӳре Чехословакипе Мексика хушшинче дипломатиллӗ ҫыхӑну тепӗр хут пуҫланса кайнине кӑтартса панӑ. Пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: Чехословаки Германи оккупацилленӗ хыҫҫӑн Мексика Чехословаки правительствипе ҫыхӑну тытма пӑрахрӗ. Мексика Чехословакие Германия тытса илнипе нихҫан та килӗшмен. Рио-де-Жанейрора пулса иртнӗ пан-Америка конференцийӗ йышӑннӑ резолюципе килӗштерсе, Мексика Чехословаки правительствипе хутшӑнса тӑрас ӗҫе тепӗр хут пуҫласа яма шут тытрӗ,—тенӗ.

Иден тухса калани

ЛОНДОН, мартӑн 30-мӗш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Иден Уэльс хулинче сӑмах тухса каланӑ. Иден Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫитӗнӗвӗсем ҫинче чарӑнса тӑнӑ. «Германин мӗнпур ҫар хӑвачӗпе хире-хирӗҫ тӑрса, ҫав хӑвата хирӗҫ вӑйлӑн та организованно ҫапӑҫса, вырӑс салтакӗсем хӑйсен ҫӗршывӗ тӑрӑх чакса пычӗҫ,—тенӗ Иден.—Германи ҫарӗсене вӗсем кашни утӑмра ҫухатусем тӳстерчӗҫ. Гитлер темиҫе кунран хӑй Мускавра пулатӑп тесе каппайнӑ самантра вырӑссем контрнаступлени пуҫласа ячӗҫ. Тӗнчери вӑрҫӑсен историйӗнче ҫакӑнтан чаплӑрах ҫитӗнӳ сахал тупӑнать. Ҫав ҫитӗнӳсене пирӗн стратеги тӗлӗшӗпе кӑна мар хакласа пӑхмалла, ӑна пирӗн этем кӗрешӗве мӗн чухлӗ пысӑк вӑй хума пултарни енчен пӑхса хакламалла. Вырӑссен паттӑрлӑхӗпе чӑтӑмлӑхне эпир тивӗҫлипех пысӑк вырӑна хурса пахалатпӑр, вӗсем ҫавӑн пек нумай вӑхӑт хушши каялла чакса пынӑ чухне питех те пысӑк сиен курма пултарнӑ. Противник вырӑссем хирӗҫ тӑрассине юлашкинчен ҫапах та хавшатса ҫитерсе ҫӗмӗрнӗ тесе шутланӑ самантра, вырӑссем тӑшмана хӑватлӑ ответ пачӗҫ, ӑна ҫӗнтерӳллӗн пырса ҫапрӗҫ. Иртнӗ ҫулла Гитлер—вырӑссем тепӗр темиҫе эрнерен мир тума ыйтӗҫ, тесе каппаятчӗ. Анчах ҫакӑ вӑл Гитлер шухӑшланӑ пек пулса тухмарӗ те, Гитлер вара кӗркунне—вырӑссен столици тепӗр темиҫе кунран унӑн аллинче пулать, тесе пӗлтерчӗ. Анчах ҫакӑ та кӗтнӗ пек пулса тухмарӗ те, Гитлер вара, хӑйӗн кампанийӗ хӗл ларичченчылай малтан вӗҫленӗ тесе мухтанаканскер, Германи ҫарӗн наступленийӗ, хӗллене пӑхмасӑрах, малалла пулса пырӗ, тесе пӗлтерчӗ. Анчах ҫакӑ вӑл каппайса пушӑ сӑмах ҫаптарни кӑна пулса тӑчӗ. Гитлерӑн мухтаса пӗтерно сисӗм-туйӑмӗ ӑна питех те пысӑк йӑнӑшсем патне илсе ҫитерчӗ. Миллионшар ҫамрӑк нимӗҫсем ҫав йӑнӑшсемшӗн хӑйсен пурнӑҫӗсене парса тата алли-урисене тӑм илтерсе ярса тӳлерӗҫ».

Малалла Иден ССР Союзне Англи енчен пулӑшу парас ыйту ҫинче чарӑнса тӑнӑ. Вӑл Англи предприятийӗсенчи рабочисен, тинӗс-ҫар тата суту-илӳ флочӗсенчи моряксен ӗҫне тивӗҫлӗ вырӑна хурса хакланӑ. Вӗсем Англирен ССР Союзне яракан ҫар материалӗсене тиессипе вырӑна ҫитерессине татти-сыпписӗр туса пынӑ.

Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фрончӗн нумай секторӗсенче вырӑс летчик-истребителӗсен аллинчи «Харрикейн» самолетсен питех те чаплӑ ӗҫӗсем ҫинчен калакан пӗлтерӳсене вулама кӑмӑллӑ, тенӗ Иден. Ҫав самолетсем Мускава сывлӑшран пырса тапӑннинчен хӳтӗлес ӗҫре сахал мар пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем Ленинграда хӳтӗлес ӗҫе хутшӑнаҫҫӗ. Вырӑссен ҫавтери пултаруллӑ та пысӑк опытлӑ летчикӗсем, Англи машинисемпе усӑ курса, нимӗҫсен самолечӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Вырӑс летчикӗсем Арктика хӗлӗн питех те йывӑр условийӗсенче те пирӗн машинӑсем лайӑх ӗҫленине питӗ пысӑк вырӑна хурса хаклаҫҫӗ. Англи танкӗсен вырӑс фронтӗнчи кӗрешӗвӗ ҫинчен те эпир ырӑ хыпарсем илтӗмӗр.

Англи ҫарӗпе сывлӑш-ҫар вӑйӗсен пахалӑхне пысӑк вырӑна хурса хакласа, Иден малалла ҫапла каланӑ: «Эпир хальхи вӑхӑтра вӑрҫӑн чи йывӑр та ҫивчӗ тапхӑрне пурӑнса ирттеретпӗр. Европӑра союзниксем тата тӗнӗл держависем татӑклӑ ҫапӑҫу пулса тӑма пултаракан ҫапӑҫӑва хатӗрленеҫҫӗ. Ҫакнашкал лару-тӑрура илемлӗ сӑмахсем калаҫса ларни пачах та вырӑнлӑ мар. Халӗ ҫавтери нумай та иксӗлми вӑй хурса кӗрешни кирлӗ. Эпир ҫӗнтерӳ пурӗ-пӗрех пирӗн алӑра пулать тесе калаҫма хӑнахнӑ. Анчах ҫӗнтерӳ вӑл ҫӗнтерсе илсен кӑна тивӗҫлипе алӑра пулать».

«Нумаях пулмасть,—тенӗ юлашкинчен Иден,—манӑн общинӑсен палатине Гонконг пирки каласа пама тиврӗ. Ҫакӑ вӑл маншӑн питех те кӑмӑллӑ мар обязанность пулчӗ. Гонконг Англирен инҫетре тӑрать. Ҫавӑн пекех Польшӑпа Норвеги те, Бельгипе Греци те кунтан инҫетре тӑнӑ пек туйӑнаҫҫӗ. Анчах та пире ҫапса аркатас пулсан, унта мӗн пулса тӑни кунта та пулма пултарать. Вӗсен кунҫулӗ чӑннипех йывӑр та хӑрушӑ. Ҫавӑн пек кунҫул вӑл вӑхӑтлӑха анчах пултӑр тесе, мирпе ирӗклӗх тата телейлӗх хӗвелӗ хӗн-хурпа асап куракан ҫав телейсӗр ҫӗршывсем ҫинче ҫӗнӗрен ялкӑшса ҫунтӑр тесе, эпир пурне те тума хатӗр. Ҫав хӗвел Англи тӳпине те ялкӑшса тухӗ».

Англин Индие панӑ сӗнӗвӗсем

ЛОНДОН, мартӑн 30-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Делирен пӗлтернӗ тӑрӑх, Стаффорд Криппс пресс-конференцире Индин ҫӗнӗ союзӗ пирки Англин сӗнӗвӗсене вуласа панӑ. Вӑл сӗнӳсене ҫакӑн пек ят панӑ: «Индин лидерӗсемпе калаҫни ҫинчен тумалли деклараци проекчӗ».

Ҫав проектӑн текстӗ ҫакӑн пек: «Англин ҫар кабинечӗ тунӑ выводсем, кунта асӑнса кӑтартнӑскерсем, Стаффорд Криппс Индин лидерӗсемпе сӳтсе-явма тесе илсе килнӗ сӗнӳсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав сӗнӳсене пурнӑҫа кӗртес-сипе кӗртес марри халь пыракан калаҫусем мӗнпе вӗҫленнинчен килет.

Англи правительстви, Индин пуласлӑхӗ пирки панӑ сӑмахсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Англире те, Индире те тимлӗн сӗннисене пӑхса тухса, Индие мӗн май килнӗ таран часрах самоуправлени паманшкӑн хӑй мӗнле утӑмсем тума шухӑшлани ҫинчен тӗрӗссӗн те уҫӑмлӑн каласа пама шут турӗ. Ҫав утӑмсен тӗллевӗ—Индин ҫӗнӗ Союзне тӑвасси. Ҫав Союз корона шайӗҫне тытса тӑракан доминион пулмалла, унӑн прависем ытти доминионсен прависем пекех пулмалла, вӑл хӑйӗн шалти ӗҫӗсем тӗлӗшпе те тулашри ӗҫӗсем тӗлӗшпе никама та пӑхӑнса тӑмалла мар. Индин ҫавнашкал Союзне тӑвас тӗлӗшпе Англи правительстви акӑ мӗнле заявлени тӑвать:

а) Вӑрҫӑ чарӑннӑ хыҫҫӑнах, ҫийӗнчех Индире суйлав органӗ тӑвас тӗлӗшпе ӗҫсем пуҫланса каймалла, ҫав орган Инди валли ҫӗнӗ конституци туса хатӗрлемелле. Суйлав органӗ тӑвас тӗлӗшпе пымалли ӗҫсен йӗрки мӗнле пулмаллине аяларах кӑтартнӑ.

б) Индири государствӑсене, аяларах кӑтартнӑ пек, пурне те ҫав конституцие туса хатӗрлекен органӑн ӗҫне хутшӑнса ӗҫлеме кирлӗ пек условисем туса параҫҫӗ.

в) Ҫавнашкал майпа туса хатӗрленӗ конституцие Англи правительстви акӑ ҫакӑн пек условисем пулсан йышӑнса пурнӑҫа кӗртме обязательство илет:

Пӗрремӗшӗнчен, ҫакӑ пулмалла: Британи Индийӗн провинцийӗсене кашниех, вӗсем ҫӗнӗ конституцие йышӑнма хатӗрленсех ҫитеймен пулсан, хӑйсен конституцийӗн хальхи формине хӑварма ирӗк памалла, ҫав вӑхӑтрах вӗсем хӑйсем кӑмӑл тусан, малашне ҫав ҫӗнӗ конституцие йышӑнма пултараҫҫӗ тесе асӑрхаттарса хӑвармалла. Ҫавнашкал ҫӗнӗ конституцие йышӑнман провинцисем тупӑнаҫҫӗ пулсан, Англи правительстви, вӗсем хӑйсем кӑмӑл тӑваҫҫӗ пулсан, тата урӑх конституци, ҫак документра кӑтартнӑ процедурӑсем Инди Союзне мӗнле тулли статут параҫҫӗ, ҫавнашкалах тулли статут паракан конституци тума хатӗр. Иккӗмӗшӗнчен, ҫакӑ пулмалла: Англи правительствипе конституци туса хатӗрлекен орган пӗр-пӗрне килӗшсе договор тумалла. Ҫав договора ответлӑх Англи аллинчен Инди аллине куҫнӑ пирки тухса тӑнӑ ҫӗнӗ ыйтусене пурне те кӗртмелле. Ҫав договора Англин раса тата тӗн тӗлӗшпе хӳтӗлеме сӑмах парса илнӗ обязательствисене кура тумалла, анчах Инди Союзӗ Британи империйӗн ытти членӗсемпе малашне мӗнле ҫыхӑнса тӑрас тет, ҫавӑн пек ҫыхӑнса тӑма паракан ирӗке хӗсмелле мар.

Индири пӗр-пӗр государство ҫӗнӗ конституцие йышӑнассипе йышӑнас маррине пӑхмасӑрах унӑн договор тӑрӑх хӑй ҫине илнӗ обязательствисене пӑхса тухмалла. Пӑхса тухасса ҫӗнӗ лару-тӑрӑва шута илсе пӑхса тухмалла.

г) Конституци туса хатӗрлекен органа, ҫӗршывӑн тӗп пайӗсенче общественнӑллӑ шухӑшӑн представителӗсем пулса тӑракан лидерсем вӑрҫӑ ӗҫӗсем пӗтиччен пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлса урӑхла форма тупаймасан, акӑ ҫакӑн пек йӗркелемелле: вӑрҫӑ пӗтсен кашни провинцирех суйлавсем туса ирттермелле, ҫав суйлавсен итогӗсем паллӑ пулсанах, ҫавӑнтах, ҫийӗнчех провинцири законодательнӑй пухусен аялти палатисен пур членӗсем те конституци туса хатӗрлекен органа суйлама тытӑнаҫҫӗ. Ҫав органа пысӑк провинцирен нумайтарах представительсем кӗреҫҫӗ, пӗчӗк провинцирен сахалтарах представительсем кӗреҫҫӗ. Ҫав органӑн составӗ хисеп тӗлӗшӗнчен суйлавҫӑсен коллегийӗн составӗнчен вунӑ хут пӗчӗкрех пулмалла. Британи Индийӗ миҫе ҫын пуҫне миҫе представитель тӑратать, Инди государствисен те ҫав йӗркепех представительсем тӑратмалла пулать, вӗсен представителӗсен полномочийӗсем те Британи Индийӗн представителӗсен полномочийӗсем пекех пулаҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑт Индишӗн ҫавтери йывӑр вӑхӑт. Халӗ ҫӗнӗ конституци туса хатӗрличчен Англи правительствин Индие хӳтӗлес ӗҫӗн ответлӑхне ирӗксӗрех хӑйӗн ҫине илме, ӗҫе тӗрӗслесе ертсе пырассине хӑйӗнех туса пыма тивет. Анчах та Индин ҫар, моральнӑй тата материальнӑй ресурсӗсене организацилес задачӑна пурнӑҫлама Инди правительствин, Инди халӑхӗпе пӗрле ӗҫлекенскерӗн, хӑйӗн ҫине илмелле. Англи правительстви Инди халӑхӗн пур тӗп сийӗсен лидерӗсене те хӑйсен ҫӗршывӗн тата пӗрлешӳллӗ нацисен империйӗн пур органӗсенче те ытларах тата халех хутшӑнса ӗҫлеме чӗнет. Ҫапла вара Инди представителӗсене Индийӗн пулас ирӗклӗхӗшӗн питех те кирлӗ ӗҫе тунӑ ҫӗрте активлӑн ӗҫлеме май парать».

Канада войскисем Англие пырса ҫитнӗ

ЛОНДОН, мартӑн 30-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англие нумаях пулмасть Канада войскисен ҫӗнӗ контингенчӗ пырса ҫитнӗ. Килнисен хисепӗ темиҫе ҫӗре ҫитет, ҫав шутрах летчиксем те, санитари службинче ӗҫлекенсем те сахал мар.

Совет Союзӗ тӑрӑх

Ирӗке тухнӑ районсенче

ЮХНОВ (Смоленск облаҫӗ), мартӑн 30-мӗш. (ТАСС). Ирӗке кӑларнӑ ялсемпе поселоксенчи халӑх красноармеецсене калама ҫук ӑшшӑн кӗтсе илет.

Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсем вырӑнаҫнӑ ялсенче хӗрарӑмсемпе хӗрсем боецсемпе командирсене кӗпи-йӗмӗсене ҫуса параҫҫӗ.

МОПР ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем хӑйсене ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑнах боецсем валли парне янӑ: темиҫе вуншар чӑх, ҫӑмартасем, какай, сухан, сӑмса тутрисем т. ыт. те.

Юхноври тата ун таврашӗнчи ялсенчи ҫамрӑксем нумаях пулмасть кӑна пулса иртнӗ ҫапӑҫу вырӑнӗсенче трофейӑсем пухма тытӑннӑ. Малтанхи куннех пӗр Юхновра кӑна танксене хирӗҫ пемелли гранатӑсемпе снарядсем темиҫе вуншар тупнӑ, сахал мар винтовка патронӗсем пухнӑ. (ТАСС).

Наукӑсен Академийӗн „Пӑр ҫинчи ҫапӑҫу" 700 ҫул тултарнӑ ятпа пулакан сессийӗ

Кӑҫалхи апрель уйӑхӗнче «Пӑр ҫинчи ҫапӑҫу» пулнӑранпа 700 ҫул тулать. Ҫав майпа Наукӑсен Академийӗ Хусанта научнӑй сесси пухать. Кун йӗркинче: «Тевтон орденӗ, унӑн малтанхи ҫӗнтерӗвӗсем тата кайранхи пораженийӗ». Ку доклада Тарле академик тӑвать, тата ытти докладсем те пулаҫҫӗ.

Наукӑсен Академийӗн Президиумӗ йышӑннӑ тӑрӑх, ҫак паллӑ событие чыслаcа, научнӑй сесси ҫавӑн пекех тата Ташкент хулинче те пулать. (ТАСС).

Ҫӗнӗрен тепӗр пуян карьер уҫнӑ

Урал тӳрчӗн кӑнтӑрти пӗр юппинче никель рудникӗ пур. Разведка туса ҫакна пӗлнӗ: никель тухакан участоксенчен пӗринче халь ӗҫлекен рудниксенчен чылай пуянрах руда выртать. Ҫӗнӗ карьер тӑвас ӗҫ пуҫланса кайнӑ. Нумай пин квадратлӑ метр ҫӗре взрыв туса сирпӗнтерме тивет, ҫӗршер метр тӑршшӗ траншейӑсем чавмалла пулать, вуншар пин кубометр ахаль породӑсем турттарса кайма тивет, чугунҫулсем хывмалла пулать. Вӑрҫӑчченхи вӑхӑтра пулсан, ку ӗҫсем ҫур ҫула та ҫитнӗ пулӗччӗҫ. Горняксен коллективӗ ҫакӑнти рудан пӗрремӗш маршрутне майӑн 1-мӗш тӗлне яма йышӑннӑ. (ТАСС).

Хулари учительсем районсене кайнӑ

Ереван хулин Сталински районӗнчи учительсем питех те паха пуҫару пуҫарнӑ. Вӗсем яла ӗҫлеме тухса кайма кӑмӑл тунӑ. Вӗсен примерӗ ыттисене те хавхалантарнӑ. Малтанхи икӗ кун хушшинче яла кайма 115 педагог ҫырӑннӑ, вӗсем пурте специальнӑй высши образовани илнӗскерсем, 45 учитель Арменин тӗрлӗ районӗсене вырӑна кайма хутсем илнӗ те ӗнтӗ. (ТАСС).

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Коллектив сотрудников Управления дороги выражает глубокое соболезнование начальнику производственного отдела

тов. БУТУСОВУ А. П.

по поводу смерти его матери

БУТУСОВОЙ Е. И.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ

ИНЖЕНЕРЫ И ТЕХНИКИ, КОНСТРУКТОРЫ ПО ХОЛОДНОЙ ОБРАБОТКЕ МЕТАЛЛА, ЭКОНОМИСТЫ-ПЛАНОВИКИ, НОРМИРОВЩИКИ, СТЕКЛОГРАФИСТ, ИНЖЕНЕР-ЭЛЕКТРИК-МОНТАЖНИК, БУХГАЛТЕРА, СЧЕТНЫЕ, СНАБЖЕНЧЕСКИЕ И СКЛАДСКИЕ РАБОТНИКИ;

РАБОЧИЕ СЛЕДУЮЩИХ СПЕЦИАЛЬНОСТЕЙ:

токаря, слесаря, жестянщики, модельщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, каменщики, печник, кочегары, фрезеровщики, сверловщики, литейщики, сварщики, гальваники, слаботочники, радист, плотники, шорники, дворники, истопники, строгальщики, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по авто, наборщик типографии, электромонтеры, ящечники-упаковщики, столяры, возчики, уборщицы, подсобные рабочие;

ПОЖАРНЫЕ РАБОТНИКИ;

ВАХТЕРЫ-ОХРАННИКИ (мужчины и женщины). Зарплата до 300 руб.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.

ПРИНИМАЮТСЯ

ПЕРЕКВАЛИФИКАНТЫ (взрослые ученики от 16 лет).

За время обучения от 1 до 3-х месяцев получают от 150 руб.

За справками обращаться от 8 до 14 часов по адресу: ул. Ленинградская, 38, отдел кадров.

6—4

Чебоксарской электростанции

ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры-водопроводчики, машинисты-дизелисты, смазчики, слесаря, слесаря-водопроводчики, электромонтеры, чернорабочие и уборщицы.

Адрес: ул. Чувашская, пос. Водосвета, контора. Отдел кадров, тел. 3—86, 4—28

3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 709 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64